24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1941
АПРЕЛЬ
3
КӖҪНЕРНИКУН
78 (5793) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЧӐВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ.

ТӐПРАН ҪИМӖҪЛӖХНЕ ХӐПАРТМАЛЛИ ПАХАРАН ТА ПАХА СРЕДСТВО

ССР Союзӗн Совнаркомӗ «Хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхри колхозсемпе совхозсенче тӗрӗс пусуҫаврӑнӑшсем тӑвасси ҫинчен» йышӑннӑ постановлени калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхра ялхуҫалӑхне малалла хӑпартса пымалли ҫулйӗре кӑтартса парать.

Тӗрӗс пусуҫаврӑнӑшсем туса хуни тӑпран ҫимӗҫлӗхне чылай хӑпартма, уйхирсенчи тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерме, ӳссе пыракан выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ валли выльӑх апачӗн базине ҫирӗплетме май парать.

Хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхри районсем ҫӗршыв ялхуҫалӑхӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫак зонӑри колхозсемпе совхозсем йӗтӗнӗн пысӑк хаклӑ сорчӗсене акса ӳстереҫҫӗ, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем лартса ӳстереҫҫӗ, пысӑк продуктивлӑ ӑратлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетеҫҫӗ. Кунта сӗтлӗ выльӑх-чӗрлӗхӗн тӗп вырӑнта тӑракан ӑрачӗсен—холмогорски, ярославски, тагильски ӗнесен рассадникӗсене туса хунӑ, пысӑк пахалӑхлӑ тир паракан романовски сурӑхсене ӗрчетес ӗҫ анлӑн сарӑлнӑ. Тӗштырӑ хуҫалӑхӗ ҫулран ҫул ӳссе пырать. Тулӑ йышӑнса тӑракан ҫӗр лаптӑкӗсем ытларах та ытларах ӳссе пыраҫҫӗ.

Хуратӑпраллӑ мар полосара социализмлӑ ҫӗрӗҫне ӳстерсе пымалли майсем калама ҫук пысӑк. Кунта ҫуркунне шыв илекен улӑхсем, выльӑх кӗтмелли чаплӑ вырӑнсем нумай. Тата акма юрӑхлӑ тумалли ҫӗрсем мӗн чухлӗ! Партин XVII съездӗнчех Сталин юлташ ҫапла каланӑ: «Тырра аякран илсе тӑракан тенӗ тӑрӑхра вӗтлӗхсемпе витӗннӗ ҫеремлӗ ҫӗрсем 5 миллион гектара яхӑн пур. Паллӑ ӗнтӗ, ҫак тӑрӑхра санталӑк япӑх мар, ҫумӑр та сахал мар ҫӑвать, уяр санталӑксем пулмаҫҫӗ. Ҫак ҫӗрсене вӗтлӗхсенчен тасатса хӑшпӗр организациллӗ ӗҫсем туса ирттерсен, тӗштырӑсем акса тумалли пит те пысӑк район туса хума пулать, вӑл вара, ҫак вырӑнсенче тырпул тухӑҫӗ яланах пысӑк пулнӑ пирки, таварлӑ тырӑ халӗ Анатри Атӑл е Вӑтам Атӑл панинчен те сахал мар туса тӑма пултарать».

Анчах та ҫак тӑрӑхра ҫӗнӗ ҫӗрсене тырӑ акма юрӑхлӑ тӑвас ӗҫ пӗчӗк хӑвӑртлӑхсемпе пулса пырать. 1940 ҫулта ҫӗнӗ ҫӗрсене акма юрӑхлӑ тумалли плана пурӗ те 38,5 процент кӑна тултарнӑ. Тӗрӗс пусуҫаврӑнӑш тӑвас ӗҫ те начар пулса пырать. Час-часах колхозсем пӗр участок ҫинех йӗтӗн хыҫҫӑн йӗтӗн, кантӑр хыҫҫӑн кантӑр акаҫҫӗ. Ҫапла тунипе уйхирсене ҫумкурӑк пусса илет, тӑпра чухӑнланать, тырпул тухӑҫлӑхӗ чакса пырать. СССР Совнаркомӗ ҫакна паллӑ турӗ: СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхри облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен ҫирӗплетесси тата ялхуҫалӑхне хӑпартасси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине Союз Наркомземӗ, республикӑсенчи, облаҫсенчи тата районсенчи советпа ҫӗрӗҫ органӗсем ҫителӗксӗр пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Чылай районсенче, ҫӗнӗ ҫӗрсене тырӑ акма юрӑхлӑ тӑватпӑр тесе, лайӑх улӑх-ҫарансене тата выльӑх кӗтмелли вырӑнсене сухала-сухала пӑрахнӑ, вӗсенчен уйхир ҫӗрӗсем туса хунӑ, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ валли апат базине пӗчӗклетсе пынӑ. Каламалли те ҫук ӗнтӗ, ҫӗнӗ ҫӗрсене ҫакӑн пек «юрӑхлӑ тунипе» акӑнакан ҫӗр лаптӑкӗсене ӳстерессишӗн пыракан большевикла кӗрешӳ хушшинче нимӗнле ҫыхӑну та ҫук. Халӗ ӗнтӗ ҫакнашкал практикӑна пӗтереҫҫӗ. СССР Совнаркомӗ вырӑнти совет органӗсене вӗтлӗхсене кӑкласа тасатас тата шурлӑхсене типӗтес вырӑнне, ҫӗнӗ ҫӗрсене акма юрӑхлӑ тунӑ пек кӑтартса, выльӑх кӗтмелли вырӑнсемпе улӑх-ҫарансене сухалама чарчӗ.

Ҫӗнӗ ҫӗрсене акмалла тӑвас ӗҫе анлӑн сарса ямалла. Ҫак ӗҫре машинно-тракторнӑй станцисем питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑмалла. Халиччен вӗсем колхозсенчи акӑнакан ҫӗр лаптӑкне ӳстерес ӗҫ ҫине сахал ҫаврӑнса пӑхнӑ, ҫак ӗҫре хӑйсен пуян техникипе сахал усӑ курнӑ.

Хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхри ялхуҫалӑхне малалла вӑйлатса пырас шутпа ССР Союзӗн Совнаркомӗ нумай уйлӑ тӗрӗс пусуҫаврӑнӑшсем тума йышӑнчӗ, вӗсенче курӑк акнӑ уйсем, хура ҫӗртмепе акнӑ ҫӗртме уйӗсем пулмалла. Ҫакӑн пек пусуҫаврӑнӑшсене пуринчен малтан йӗтӗн акса тӑвакан колхозсенче, вӑрлӑх ӗрчетекен хуҫалӑхсенче, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен пысӑк фермӑллӑ колхозсенче, хула ҫумӗнчи зонӑсенчи пахча-ҫимӗҫ лартса тӑвакан колхозсенче, ҫӗрулмирен тӗрлӗ япаласем хатӗрлекен промышленноҫпа сахӑр промышленноҫӗн зонисенче вырнаҫса тӑракан колхозсенче тумалла. Ҫӗнӗ пусуҫаврӑнӑшсем тӑвас тата пур пеккисене йӗркелесе ярас ӗҫе тӑватӑ ҫултан кая юлмасӑр туса пӗтермелле.

Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ валли выльӑх апачӗн ҫирӗп базине туса хурас ӗҫ ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхаҫҫӗ. Хӑйсем тӗллӗн ӳсекен улӑх-ҫарансем ҫук колхозсенче ятарласах выльӑх апачӗ тумалли культурӑсен пусуҫаврӑнӑшне тӑваҫҫӗ. Уйсенче курӑксем акса ӳстермелле туни ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫне ӳстерме май парать, выльӑх-чӗрлӗх валли тутӑ тытакан лайӑх апат парать, тӑпра структурине лайӑхлатать. Уйхирсенче курӑксем акса туни вӑл—хуҫалӑха культурӑллӑ тытса пынине кӑтартса паракан паллӑ, икӗ тӗп отраҫлӗ—уйхир ӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе пур майсемпе те вӑйлатса пырассишӗн тӑрӑшни пулса тӑрать.

ССР Союзӗн Совнаркомӗ хӑйӗн постановленийӗнче: хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхра тулӑн ҫирӗп базине туса хума пур майсем те пур, тесе паллӑ тӑвать, вырӑнти организацисене кӗрхи тулӑпа ҫурхи тулӑ акса тӑвакан ҫӗр лаптӑкӗсене малалла ӳстерме кирли ҫине, ҫапла вара хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхран Совет Союзӗн тулӑллӑ пысӑк районӗсенчен пӗри туса хума кирли ҫине кӑтартса парать.

Паллӑ ӗнтӗ, хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхра ҫӗр кӗлтӑпраллӑ, ӑна удобрени, уйрӑмах органикӑллӑ удобрени кирлӗ. Тислӗксӗр, органикӑллӑ удобренисӗр пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ан кӗт. Ӑҫта ҫӗре удобренисемпе лайӑх ҫемҫетеҫҫӗ, ӑҫта тислӗке хуҫалла тыткалаҫҫӗ, ҫавӑнта ялхуҫалӑхӗн пур культурисем тӑрӑх та пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илеҫҫӗ. Анчах та нумай колхозсем вырӑнти удобренисене питех те начар сыхласа усраҫҫӗ, вӗсемпе начар усӑ кураҫҫӗ, уйхирсенчи тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас ӗҫ валли шалти ресурссене мобилизацилемеҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ сывӑхри икӗ ҫул хушшинче колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен кашни фермӑпа кашни вите ҫумӗнче тислӗк шывне те пухса тӑракан навозохранилищӗсем тума тивӗҫлӗ.

Пусуҫаврӑнӑшсем тӑвасси—государствӑллӑ пысӑк ӗҫ. Ҫак ӗҫре стандарт, пӗрлӗхлӗ схема пулма тивӗҫлӗ мар. Пусуҫаврӑнӑшсене тунӑ чухне конкретлӑ уйрӑмлӑхсене, кашни колхозпа совхозра производствӑна малалла аталантарса пымалли ҫулйӗрсене шута илес пулать. Пусуҫаврӑнӑшсене ҫапла тӑвас пулать: вӗсем колхозӑн мӗнпур ҫӗрӗсемпе рационально усӑ курма тата колхоз производствин пур отраҫлисене те пӗр-пӗринпе тӗрӗс ҫыхӑнтарса пыма май паччӑр. Ҫакӑн чухне вара пусуҫаврӑнӑшсем социализмлӑ ҫӗрӗҫне малалла хӑпартса пырас ӗҫре хӑватлӑ вӑй пулса тӑрӗҫ.

Ҫак пысӑк та кирлӗ ӗҫе колхозниксене хӑйсене, опытлӑ специалистсене—ҫӗрйӗркелекенсене, агрономсене, зоотехниксене, наукӑпа стахановла практика ҫыннисене явӑҫтарсан кӑна пусуҫаврӑнӑшне тӗрӗс тума пулать. Ҫак ыйтӑва кабинетлӑ йӗркепе татса пама юрамасть. Ҫак государствӑллӑ пысӑк та паха ӗҫе бюрократизациленинчен хӑрушӑраххи нимӗн те ҫук.

Халӗ колхозлӑ ялта производствӑллӑ ҫӗкленӳ нихӑҫан пулман пекех вӑйланса кайни палӑрать. Партипе правительство ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановление миллионшар колхозниксем пысӑк хаваслӑхпа саламласа кӗтсе илчӗҫ. Вӗсем ҫуракине стахановла хатӗрленеҫҫӗ, кӑҫалхи ҫула производствӑра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе паллӑ тӑвас кӑмӑлпа ҫунаҫҫӗ. Хуратӑпраллӑ мар тӑрӑхра тӗрӗс пусуҫаврӑнӑшсем туни социализмлӑ ҫӗрӗҫне малалла вӑйлатса пыма пулӑшӗ.

(«ПРАВДА» умстатьинчен, мартӑн 30-мӗш).

Звеньевой отчечӗ парти Обкомӗн бюровӗнче

КУРСК, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Глушковски районри Сталин ячӗпе тӑракан колхозри коммунистка-звеньевойӑн А. А. Бондаренко юлташӑн докладне итленӗ. Звено чылай ҫулсем хушши пысӑк тухӑҫлӑ сахӑр кӑшманӗ тата тӗштырӑ пуҫтарса илет. Иртнӗ ҫулта, санталӑк условийӗ лайӑхах пулман пулин те, гектартан 513-шер центнер сахӑр кӑшманӗ, 148 пӑт вир, 270 пӑт ыраш тата 220 пӑт кӗрхи тулӑ пуҫтарса кӗнӗ.

Бондаренко юлташ звени виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ умлӑ-хыҫлах Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗ шутланать. Звено колхоз уйхирӗнче малта пыракан агротехникӑна ҫине тӑрсах пурнӑҫа кӗртсе пырать. Акнӑ ҫимӗҫсем хушшинчи ҫӗре кӑпкалатсах тӑраҫҫӗ тата калчана вырӑнти тата минераллӑ удобренисемпе апат параҫҫӗ. Кӗрхи калчасемпе ҫурхи культурӑсене ӳрелессине сарлакан туса пыраҫҫӗ. Ҫӗртмепе кӗрхи ҫӗртме сухине 27 сантиметртан ӑшӑх сухаламаҫҫӗ.

Звено тӑрӑшса ӗҫлет. Звено членӗсем хӑйсен заданийӗсене кулленех ик-виҫӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

Обком бюровӗ Бондаренко юлташ звени пысӑк ӗҫсем тунине палӑртса хӑварнӑ. Обком бюровӗ — ВКП(б) Глушковски райкомне Бондаренко юлташ звенин опытне районри ытти колхозсене куҫарассине организацилеме хушнӑ.

8 пин тенкӗ тӳленӗ

Виҫҫӗмӗш Пятилетка (иккӗмӗш ҫулхи кӑларӑм) Заемӗн иккӗмӗш тиражӗ тӑрӑх выляса илнисене мартӑн 15-мӗшӗпе 27-мӗш хушшинче пӗтӗмпе 8.200 тенкӗ тӳленӗ. Вӗсем хушшинче 200 — 300 тенкӗ выляса илнисем сахал мар, пӗр облигаци 1000 тенкӗ выляса илнӗ.

Ҫӗмӗрле. **(Хамӑр корр.).**

РСФСР I-мӗш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН IV СЕССИЙӖ

Апрелӗн 1-мӗшӗнчи лару дневникӗ

Апрелӗн 1-мӗшӗнче Кремльре РСФСР Верховный Совечӗн IV Сессийӗ уҫӑлнӑ.

6 сехет тӗлне РСФСР Верховный Совечӗн ларӑвӗсем пулакан зала депутатсем пухӑннӑ. Сессине чӗнсе илнӗ хӑнасем — Мускаври предприятисенчи стахановецсемпе ударниксем, ученӑйсем, инженерно-технически работниксем, искусствӑсен мастерӗсем, Хӗрлӗ Ҫар представителӗсем. Дипломатиллӗ корпусӑн, Совет Союзӗнчи хаҫатсемпе ютҫӗршывсенчи хаҫатсен представителӗсен ложисем ҫинче те ҫынсем туллиех.

Председатель сӗтелӗ умне РСФСР Верховный Совечӗн Председателӗ депутат **А. А. Жданов**, Председатель Заместителӗсем — **А. Х. Тынчеров** тата **П. С. Макарова** депутатсем пырса тӑраҫҫӗ. Ложӑсем ҫинче — **В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, Н. А. Вознесенский, Г. М. Маленков, Н. А. Булганин, М. Ф. Шкирятов, А. Е. Бадаев, С. М. Буденный, А. Ф. Горкин, Н. Г. Кузнецов, И. С. Хохлов, А. Н. Сухов, Д. Д. Дегтярь, К. Д. Памфилов, Г. А. Динмухаметов, П. В. Бахмуров, Р. К. Ибрагимов, А. Д. Менбариев, А. И. Ефремов, И. А. Власов, Н. Н. Журавлев, П. С. Попков, И. К. Седин, А. И. Шахурин, А. П. Староторжский, В. П. Потемкин, А. А. Пекшеев, А. А. Посконов, Д. В. Павлов, А. Ф. Третьяков, А. П. Гришакова** тата РСФСР Верховный Совет Президиумӗн ытти членӗсемпе Халӑх Комиссарӗсем. Вӗсем пырса кӗрсен депутатсемпе хӑнасем нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ.

РСФСР Верховный Совечӗн Председателӗ депутат **А. А. Жданов** IV Сесси уҫӑлнӑ тесе пӗлтерет. Вӑл Сессире пӑхса тухма ҫакӑн пек ыйтусем тӑратни ҫинчен пӗлтерет:

1. Россия Советлӑ Федеративлӑ Социализмлӑ Республикин 1941 ҫулти Государство бюджетне ҫирӗплетесси.
2. РСФСР Верховный Совечӗн Президиумӗ виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш Сессисем хушшинче кӑларнӑ тата РСФСР Верховный Совечӗ ҫирӗплетме тивӗҫлӗ Указсене ҫирӗплетесси.

Депутат **В. П. Пронин** РСФСР Верховный Совечӗн IV Сессийӗн вулаҫа панӑ кун йӗркине ҫирӗплетме сӗнет. Ҫак сӗнӗве пурте пӗр саслӑ пулса йышӑнаҫҫӗ.

Сесси кун йӗркинчи пӗрремӗш ыйтӑва пӑхса тухма тытӑнать. Доклад тума РСФСР Финанс Халӑх Комиссарне **А. А. Посконов** юлташа сӑмах параҫҫӗ.

— Депутат юлташсем, — тет Посконов юлташ, РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ РСФС Республикин 1941 ҫулти Государство бюджетне Сессире пӑхса тухса ҫирӗплетме тӑратать. Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, Россия Федерацийӗнчи халӑхсем Сталинла виҫҫӗмӗш пятилеткӑн тӑваттӑмӗш ҫулӗн программине калама ҫук пысӑккӑн хавхаланса кӗтсе илчӗҫ. Совет ҫыннисем ҫакна лайӑх пӗлеҫҫӗ: хӑйсене коммунистла парти тата аслӑ Сталин ертсе пыракан ҫул вӑл—коммунизмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсен ҫулӗ пулса тӑрать!

Ҫак сӑмахсене саламласа, депутатсемпе хӑнасем нумайччен алӑ ҫупаҫҫӗ.

— 1940 ҫулти хуҫалӑх итогӗсем, — тет малалла докладчик, — Россия Федерацийӗнчи халӑхсем хуҫалӑхпа культура строительствинче ҫӗнӗ чаплӑ ҫитӗнӳсем тунине кӑтартса параҫҫӗ. 1939 ҫултипе танлаштарсан, промышленность туса кӑларакан продукци хисепӗ 9,2 процент ӳснӗ. Ҫак ӳсӗм уйрӑмах иккӗмӗш ҫурҫулта пысӑк пулнӑ. Анчах та ҫакна паллӑ туса хӑварас пулать: пирӗн хуҫалӑх организацийӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем — Г. М. Маленков юлташ ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗнче тунӑ докладра кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсем пулман пулсан, пирӗн ҫитӗнӳсем татах та пысӑкрах пулнӑ пулӗччӗҫ.

Малтанхи даннӑйсем тӑрӑх, 1940 ҫулти государство бюджетне доходсем тӑрӑх 24.205 миллион тенкӗ, расходсем тӑрӑх — 23.698 миллион тенкӗ пурнӑҫа кӗртнӗ. Ҫапла ӗнтӗ, доход расходран 507 млн. тенкӗ чухлӗ пысӑкрах пулнӑ. Халӑх хуҫалӑхне 4.513 миллион тенкӗ средство хунӑ, социаллӑ-культурӑллӑ ӗҫсенче 16.204 миллион тенкӗ расход тунӑ. Автономлӑ республикӑсен бюджечӗсемпе вырӑнти бюджетсен сумми 19.153 миллион тенкӗ пулнӑ.

РСФС Республикин 1941 ҫулти Государство бюджечӗ ҫине куҫса, Посконов юлташ ҫапла пӗлтерет: Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ бюджетӑн доход пайне 24.988 миллион тенкӗ суммӑлӑх палӑртнӑ. Бюджет дохочӗсене илмелли пысӑк та паха статья — тупӑшсенчен шутласа илекен отчисленисем пулса тӑрать. Ҫав отчисленисен сумми 7.210 миллион тенкӗ пулмалла.

Социализмлӑ хуҫалӑхӑн тупӑшлӑхӗ ҫулран ҫулах ӳссе пырать. Сталинла виҫҫӗмӗш пятилетка ҫулӗсенче республикӑн государство бюджечӗ валли тупӑшсенчен шутласа илекен отчисленисен виҫи 11 процентран пуҫласа 28,8 процента ҫити хӑпарнӑ. Ҫакӑнтан лайӑх курӑнать ӗнтӗ, промышленноҫра продукцин хӑйне ларакан хакне чакарни, государство суту-илӳвӗнче накопленисене ӳстерни тата обращени расхочӗсене чакарни питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Докладчик РСФСР Вӑрман промышленноҫӗн Халӑх Комиссариатне хытӑ критиклет, ҫак Комиссариат продукцин хӑйне тума ларакан хакне ӳстернӗ, пысӑк тӑкаксем тунӑ. Кунта ҫакна калани те ҫителӗклӗ: октябрьпе ноябрь уйӑхӗсенче вӑрман хатӗрлес ӗҫре механизированнӑй транспорт пӗтӗм ӗҫ вӑхӑчӗн 50 процент ытларах пайне ӗҫлемесӗр тӑрса ирттернӗ. Иртнӗ ҫулта Наркомместпромӑн республика промышленноҫӗ накопленисен планне 22.500 пин тенкӗ чухлӗ тултарман, республика бюджечӗ 19.600 пин тенкӗ парса ҫитермен. Наркоматсен, главксен, трестсен тата предприятисен руководителӗсем ҫакнашкал хуҫасӑрлӑхпа тирпейсӗрлӗхе пӗтерме, хозрасчетпа финанс дисциплинине татӑклӑнах ҫирӗплетме, продукцин хӑйне тума ларакан хакӗпе тупӑшсем тӑрӑх плансене тултарса пыма тивӗҫлӗ. Финанс органӗсем хуҫалӑха, экономикӑна тарӑнрах кӗрсе пӑхма, хуҫалӑх органӗсем государство бюджечӗ умӗнче хӑйсен обязательствисене мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине ҫирӗппӗн контроллесе тӑма тивӗҫлӗ.

1941 ҫулта, 1940 ҫултипе танлаштарсан, оборотран илекен налог тӑрӑх пухӑнмалли поступленисем 10 миллиард тенкӗ чухлӗ ӳсеҫҫӗ. Ҫак налогран бюджет валли шутласа илекен отчисленисем 4.490 миллион тенкӗ пулаҫҫӗ. Ҫак отчисленисене мӗнпур хуҫалӑх органӗсем ҫийӗнчех, пӗр тытса тӑмасӑр бюджета куҫарса пымалла тӑвас пулать.

Сессие заемпа перекет тата государство страхованийӗ тӗлӗшӗнчи ӗҫсем ҫинчен тата ҫак ӗҫри задачӑсем ҫинчен каласа парса, докладчик 1941 ҫулти государство бюджечӗн расход пайӗ ҫинчен калама тытӑнать. Пӗтӗм расходсен суммине 24.978 миллион тенкӗ палӑртса хунӑ.

— Бюджетӑн виҫӗ пайӗнчен иккӗ ытларах пайӗ, — тет вӑл, — социаллӑ-культурӑллӑ строительство ӗҫне каять. Ҫакӑ вӑл республика бюджечӗн Совет Союзӗнчи пӗтӗм бюджет системинчи ролӗпе пӗтӗмӗшпех килӗшсе тӑрать.

Халӑх хуҫалӑхӗн нушисем валли 4.970 миллион тенкӗ пама палӑртнӑ, социаллӑ-культурӑллӑ мероприятисем валли — 16.987 миллион тенкӗ, управленипе суд органӗсем валли — 2.584 миллион тенкӗ, ытти расходсем валли —437 миллион тенкӗ.

Халӑх хуҫалӑхӗ валли паракан средствӑсене кӑтартса парса, Посконов юлташ ҫапла калать: хӑшпӗр наркоматсем тӑрӑх капитальнӑй расходсен пысӑкрах пайне хӑйсен средствисен шучӗпе тумалла. Иртнӗ ҫулта хӑшпӗр наркоматсен ҫак средствӑсене тытса тӑнӑ, ҫакӑнпа вара строительство валли укҫа-тенкӗ парас ӗҫе чӑрмантарса пынӑ. Ҫакнашкал положение пӗтерес пулать. Финанс органӗсемпе банксем капитальнӑй строительство валли средствӑсем мӗнле пухӑнса пынине ҫирӗпрех контроллесе тӑма тивӗҫлӗ. Хӑшпӗр хозяйственниксем оборот средствисемпе кирлӗ мар ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ, юлакан чӗртаварсен, материалсен тата хатӗр продукцин хисепӗ палӑртса ҫирӗплетнӗ нормисенчен нумай пысӑкрах пулаҫҫӗ. Ҫакнашкал положенине пачах та чӑтса тӑма ҫук. Ҫакӑ вӑл предприятисене йӗркеллӗ ӗҫлеме чӑрмантарать тата финанс енӗпе вӗсен умне йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать. Пирӗн хозяйственниксем финанссене, экономикӑна чӑннипех вӗренсе алла илме, государствӑн кашни пӗр пус средствипех вырӑнлӑ усӑ курмалла тума тивӗҫлӗ.

Республика государство бюджечӗн 40 процента яхӑн средстви халӑха вӗрентес ӗҫе каять. Ҫакӑ вӑл большевикла партин XVIII съезчӗ лартнӑ задачӑпа — виҫҫӗмӗш пятилеткӑра хуласенче пурне те 10 ҫул вӗрентес тата яллӑ вырӑнсемпе мӗнпур нациллӗ республикӑсенче пурне те 7 ҫул вӗрентессине туса ҫитерес задачӑпа пӗтӗмӗшпех килӗшсе тӑрать. 1941 ҫулта РСФС Республикинчи шкулсенче 20 миллион ача ытларах — пӗлтӗрхинчен 900 пин ҫын нумайрах вӗренмелле пулать.

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫ валли паракан средствӑсем 5.553,1 миллион тенкӗ — 1940 ҫултинчен 13 процент нумайрах шутланаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл— государство бюджечӗн тӑватӑ пайӗнчен пӗр пайне яхӑнӗ пулать. Ҫак средствӑсем хуласемпе ялсенчи больницӑсенче ҫӗнӗрен 9.640 койка тума, ача яслисенчи вырӑнсене 45 пин вырӑн чухлӗ ӳстерме, амбулаторисен, ача консультацийӗсен тата больницӑсен хисепне чылаях ӳстерме май параҫҫӗ. Амбулаторисенчи врачсен хисепӗ, уйрӑмах яллӑ вырӑнсенчи врачсен хисепӗ 4.637 ҫын чухлӗ ӳсет. Республикӑри мӗнпур ялсоветсен тӑватӑ пайӗнчен виҫӗ пайӗнче 1941 ҫулта медицина учрежденийӗсем пулаҫҫӗ.

Социаллӑ обеспечени енӗпе тӑвакан расходсем те чылай ӳсеҫҫӗ. Пенсисемпе пособисем пама 1.740 миллион тенкӗ уйӑраҫҫӗ, 1940 ҫулта 1.586 миллион тенкӗ пулнӑ.

— Совет правительстви, — тет Посконов юлташ, — шкулсем, больницӑсем, клубсем, библиотекӑсем, ача яслисем тата ытти социаллӑ-культурӑллӑ учрежденисем валли кашни ҫулах калама ҫук пысӑк средствӑсем парать. Халӑха вӗрентес тата халӑх сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен органсем ҫак средствӑсене перекетлӗн, тирпейлӗ хуҫа пек, ӗҫшӗн мӗн май килнӗ таранах усӑ кӳрсе расходлама тивӗҫлӗ. Наркомпроспа Наркомздрав хӑйсен учрежденийӗсенчи финанс дисциплинине ҫирӗплетме, средствӑсене мӗнле расходланине кунсеренех ҫирӗппӗн тӗрӗслесе тӑмалла тума тивӗҫлӗ.

1940 ҫулта государство аппаратне пӗчӗклетес тата йӳнерех лартмалла тӑвас тӗлӗшпе чылай ӗҫсем туса ирттернӗ. РСФСР тӑрӑх аппарата пӗчӗклетнипе перекетленекен сумма уйӑхра 43 миллион тенкӗ шутланать. РСФС Республикин Государство бюджечӗ тӑрӑх 1941 ҫулта управлени енӗпе тата суд органӗсене тытса тӑрас тӗлӗшпе пулакан расходсем 206 миллион тенкӗ чухлӗ чакаҫҫӗ. Управлени аппаратне малалла пӗчӗклетнипе перекетленмелли суммӑран, СССР Государство бюджетне кӗртнӗ 2 миллиард тенкӗрен чылаях пысӑк пайӗ РСФСР ҫине ӳкет. Ҫакна тума пирӗн пур майсем те ҫителӗклӗ.

Докладчик чылай хуҫалӑх организацийӗсен структури пысӑк пулнине, штатсем тивӗҫсӗр ӳссе кайнине кӑтартса паракан тӗслӗхсем илсе кӑтартать. Сӑмахран, Главхимпромӑн снабжени отделӗнче пурӗ 36 служащи ӗҫлет, ҫапла пулсан та унта 16 сектор тата группӑсем шутланаҫҫӗ. Ҫак отделра тӗрлӗ йышши начальниксем 29 ҫын, рядовой работниксем 7 ҫын шутланаҫҫӗ: кашни пӗр работник пуҫне 4 руководитель тивет. Час-часах законран пӑрӑнса кайса служащисене ӗҫ укҫи ӳстерсе парас тесе, хӑшпӗр руководительсем должноҫсене ҫӗнӗ ятсем парас ҫул ҫине тӑраҫҫӗ. Сӑмахран, Мускав облаҫӗнчи промсоветӑн ремонтно-бытовой конторин штатсен проектӗнче ҫакнашкал должноҫсем палӑртса хунӑ: атӑ-пушмак юсас тӗлӗшпе ӗҫлекен старший инженер, тумтир юсас тӗлӗшпе ӗҫлекен старший инженер, лаша кӳлмелли хатӗрсене юсас тӗлӗшпе ӗҫлекен старший инженер, снабжени енӗпе ӗҫлекен инженер т. ытти те. Ҫакӑ вӑл государствӑна улталани, закона тӳррӗмех пӑсни пулса тӑрать, урӑх нимӗн те мар. Штатсенчи ытлашши расходсене, штатсен дисциплинине пӑсакансем ҫине либералла пӑхассине татӑклӑнах пӗтермелле.

Хӑйӗн доклачӗн юлашки пайӗнче Посконов юлташ 1941 ҫулти вырӑнти бюджетсем ҫинчен калать.

Вырӑнти бюджетсен пӗтӗм суммине 20.178.900 пин тенкӗ палӑртнӑ. 1940 ҫултипе танлаштарсан вӑл 1.025.800 пин тенкӗ чухлӗ ӳсет. Ҫак ӳсӗмре Россия Федерацийӗнчи автономлӑ республикӑсен, крайсен тата облаҫсен хуҫалӑхӗпе культури пӗрмаях вӑйланса пыни уҫҫӑн палӑрса тӑрать.

Облаҫсен, крайсен, автономлӑ республикӑсен экономикипе культури ӳссе пынине докладчик чылай примерсемпе кӑтартса парать.

Акӑ Челябинск облаҫӗ. Сталинла пятилеткӑсен ҫулӗсенче вӑл хура металлургипе цветной металлургин, машиностроенин, электроэнерги туса кӑларас ӗҫӗн питех те пысӑк центрӗсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Революциччен область территорийӗ ҫинче ялти шкулсем 1.706 шкул, хуласенче пуҫламӗш училищесем 30 училище тата общеобразовательнӑй вӑтам шкулсем 13 шкул пулнӑ. Хальхи вӑхӑтра облаҫра пуҫламӗш шкулсем 2.367, туллимар вӑтам шкулсем 522 тата вӑтам шкулсем 196 шкул шутланаҫҫӗ — вӗсенче 500 пин ача ытла вӗренет. Челябинскри халӑх хисепӗ кӗске срок хушшинчех 5 хута яхӑн ӳснӗ. Область бюджечӗ ҫулран ҫулах ӳссе пырать, 1934 ҫултипе танлаштарсан вӑл 1941 ҫулта 2 хут ӳсет.

Юлашки 8 ҫул хушшинче Ханты-Мансийски национальнӑй округӗн бюджечӗ 4 миллион тенкӗрен 25,5 миллион тенке ҫити — 6 хут ытла ӳснӗ. Паллах ӗнтӗ, ҫакӑ вӑл облаҫӑн экономикӑллӑ тата культурӑллӑ сӑн-сӑпатне вӑйлӑн улӑштарнӑ. Ҫак вӑхӑт хушшинче тырӑ акса тӑвакан ҫӗр лаптӑкӗ 495 гектартан 11.565 гектара ҫити ӳснӗ. Революциччен ханты тата манси халӑхӗсем хушшинче хутла пӗлекен ҫынсем пӗрерӗн кӑна шутланнӑ. 1939 ҫулти перепиҫ тӑрӑх пӑхсан, халӑхӑн 40 проценчӗ хутла пӗлни курӑнать. Облаҫра шкулсем, клубсем, шкул ҫулне ҫитмен ачасен учрежденийӗсем нумай шутланаҫҫӗ. Революциччен округ территорийӗнче пурӗ те 2 врач тата 5 фельдшер кӑна пулнӑ. 1941 ҫулта округра медицина работникӗсем 400 ҫын ытла шутланаҫҫӗ.

Ҫакнашкал фактсене ытти облаҫсемпе нациллӗ республикӑсем тӑрӑх та илсе кӑтартма пулать. Ҫак фактсем совет культури ӳссе чечекленни ҫинчен, ленинла-сталинла наци политикин ҫӗнтерӗвӗ ҫинчен калаҫҫӗ.

Хӑйӗн доклачӗн вӗҫӗнче Посконов юлташ ҫапла калать:

— Совет халӑхӗн социализмлӑ тӑван ҫӗршыв хӑватне ҫирӗплетес, аслӑ Сталин ертсе пынипе, ҫӗнӗ те ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тӑвас кӑмӑлӗ никам ҫӗмӗрейми ҫирӗп. Ҫакӑ вӑл Россия Федерацийӗн 1941 ҫулти Государство бюджетне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртессине нимӗн иккӗленмелле мар шантарса тӑрать.

Ҫак сӑмахсене саламласа, делегатсемпе хӑнасем тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ.

Содоклад тума РСФСР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗн Председателӗ депутат **И. А. Власов** сӑмах илет. Вӑл ҫапла кӑтартса парать: РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ 1941 ҫулти Государство бюджетне пӗтӗмӗшпех республика халӑх хуҫалӑхӗн планӗпе килӗштерсе тунӑ, вӑл ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII конференцийӗ лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртме пулӑшать. 1941 ҫулти государство бюджечӗн доходпа расход статьисене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн, РСФСР Верховный Совечӗн Бюджет Комиссийӗ бюджета ырлать тата ӑна чылай тӳрлетӳсемпе пӗрле ҫирӗплетме сӗнет.

— Юлашки 5 ҫул хушшинче кӑна,— тет депутат Власов, — пирӗн республика бюджечӗ 10 миллиард тенкӗне яхӑн ӳсрӗ. Ҫакӑ вӑл халӑх хуҫалӑхӗн мӗнпур отраҫлисем пӗрмаях ӳссе пынине тата пирӗн республикӑри халӑхсен культурӑллӑ-материаллӑ шайӗ хӑпарса пынине уҫҫӑн кӑтартса парать.

Республика хуҫалӑхпа культура строительствинче тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен тӗплӗн каласа, депутат Власов республикӑри хӑшпӗр наркоматсен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене те паллӑ тӑвать. Аш-какайпа сӗт-ҫу промышленноҫӗн тата апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн наркомачӗсен ӗҫӗсен примерӗ тӑрӑх вӑл ҫакна кӑтартса парать: ҫак наркоматсем планран ирттерсе пысӑк расходсем тунӑ тата начар пахалӑхлӑ продукци кӑларнӑ, ҫавӑнпа та бюджета тивекет тӳлевсене парса татни вӑл—ӗҫӗн пӗчӗк пайӗ кӑна-ха. Государство умӗнчи обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртесси вӑл — продукцин хӑйне тума ларакан хакне тӑтӑшах чакарса пырассине, хозрасчета пур майсемпе те ҫирӗплетсе, хуҫасӑрлӑха тӗппипех пӗтерсе пырассине, укҫа-тенкӗпе материалсене перекетлессине, социализмлӑ накопленисене ӳстерсе пырассине тата вӗсене халӑх хуҫалӑхӗпе культурӑна малалла вӑйлатса пырас ӗҫе ярассине пӗлтерет.

Бюджет Комиссийӗн содокладне итленӗ хыҫҫӑн РСФСР 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн IV Сессийӗн пӗрремӗш ларӑвӗ хупӑнать. Апрелӗн 2-мӗшӗнче ирхине 11 сехетре РСФСР 1941 ҫулти Государство бюджечӗ ҫинчен тунӑ доклад тӑрӑх пренисем пуҫланаҫҫӗ. (ТАСС).

ВӐРМАН ХАТӖРЛЕВӖ

Кулленхи графика пӑхӑнмаҫҫӗ

ҪӖМӖРЛЕ. (**Хамӑр корр.**). Механизациленӗ вӑрманпункчӗ хӑйӗн программине тултарайманни — уйрӑм пунктсемпе участоксем тата ҫулсем график тӑрӑх ӗҫлеменнинчен килет. Нихӑш участок та, пункт та кулленхи графика пӑхӑнмаҫҫӗ. Ҫавна пула мехлесопунктӑн графикӗ пӑсӑлать.

Март уйӑхӗнчи график тӑрӑх мехлесопунктӑн кашни кун 900 фестметр касса хатӗрлемелле, 2355 фестметр турттармалла тата кирлӗ пунктсем патне 990 фестметр турттарса кӑлармалла пулнӑ. Анчах ҫак плана сайра кунсенче кӑна тултарнӑ, чылай чухне ӑна 60—70 процентран ытла тултарайман.

Юлашки вӑхӑтра ӗҫе хӑвӑртлатмалла пулнӑ ӗнтӗ. Вӑрман хатӗрлев планна тултарма шутлӑ кунсем ҫеҫ юлнӑ темелле. Ҫапах та кунта васкани пачах сисӗнмест. Ку уйрӑмӑнах ӗҫ вӑйӗ килсе тӑнинчен те аван курӑнать. Мартӑн 29-мӗшӗнче вӑрман хатӗрлевӗнче (мехлесопунктра) пӗтӗмпе ҫураннисем 792 ҫын, лашапа 866 ҫын ӗҫленӗ пулсан, мартӑн 30-мӗшӗнче вара пӗтӗмпе те ҫураннисем 638 ҫын, лашапа 708 ҫын кӑна ӗҫленӗ. Нихӑш район та ӗҫ вӑйӗ парас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлени курӑнмасть. Мартӑн 30-мӗшӗнче Элӗк районӗнчен ҫураннисем 218 ҫын, лашапа 146 ҫын, Пӑрачкав районӗнчен — 107 ҫын, лашапа 120 ҫын ӗҫленӗ. Советски районран пӗр кун хушшинче турттарнӑ ҫӗрте 53 ҫын чакнӑ.

Ҫаксене пула ӗнтӗ графика пурнӑҫлама ҫук. Мартӑн 30-мӗшӗнче пӗр кунхи плана 50 процент та тултарман, мартӑн 31-мӗшӗнче те пысӑк улшӑнусемех пулман.

Партипе советсен районсенчи организацийӗсен вӑрман хатӗрлес ӗҫе тимлӗн, большевикла ертсе пымалла.

Х. Л.

Хӑйсен обязательствине тултармаҫҫӗ

СӖНТӖР. «1-ое Мая» колхоз вӑрман касса хатӗрлес тата турттарас тӗлӗшпе калама ҫук кая юлса пырать. Пӗрремӗш кварталти плана 67 процент кӑна тултарнӑ.

Колхоз председателӗ Митрофанов юлташ,—эпир пире панӑ заданине пӗтӗмпех тултаратпӑр, тесе виҫӗ уйӑх хушши сӳпӗлтетсе пурӑнчӗ. Квартал вӗҫленчӗ, анчах Митрофанов юлташ хӑйӗн сӑмахне пурнӑҫа кӗртеймерӗ.

Колхозран кашни кун вӑрманта ҫураннисем 30 ҫын, лашапа 21 ҫын ӗҫлемелле. Пиллӗкмӗш кун ӗнтӗ вӑрманта пӗр ҫын та ӗҫлемест.

Ялсовет исполкомӗ тата унӑн председателӗ Алексеев юлташ та вӑрман хатӗрлевӗн планне тултарассишӗн сахал интересленеҫҫӗ. Единоличниксем хӑйсене панӑ заданине ҫурри ытларах кӑна тултарнӑ, анчах ялсовет исполкомӗ государство панӑ заданине тултарассинчен пӑрӑнса ҫӳрекен единоличниксем пирки нимӗн те тумасть.

Л. Скворцов.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тĕне хирĕçле пропаганда кая юлнă

Тĕне хирĕçле пропагандăна кашни кулленех туса пыма кирлине пурте пĕлетпĕр. Анчах Сĕнтĕрвăрри районĕнче çак ĕç пит те япăх пырать. Кунта ВКП(б) райкомĕ тĕне хирĕçле пропаганда çине пачах çаврăнса пăхман тесен те тĕрĕс пулать. ВКП(б) райкомĕ СВБ райсоветĕ çине шаннă, çав вăхăтрах СВБ райсоветĕ нимĕн те туман. Çавна пула ку ĕç пит кая тăрса юлнă.

СВБ райсоветне суйланăранпа ĕнтĕ пĕр çулталăк ытла иртрĕ. Анчах çак хушăра райсовет пленумне те пухман, президиум ларуне те ирттермен. Нимĕнле ыйту та сӳтсе-явмач.

СВБ райсоветĕ ĕçлеменнине пула турăсăрсен халиччен пулнă ячейкисем те хăйсен ĕçне пачах сӳнтерсе лартнă. Сăмахран, 1939 çулти январь уйăхĕнче районра пурĕ 39 ячейка тата вĕсенче 1109 член шутланнă пулсан, паянхи куна 22 ячейка кăна юлнă. Членсен шучĕ те çурри ытла чакнă. Çитменнине тата 22 ячейкăран 4 ячейки çеç ĕçлеççĕ, ыттисем хут çинче çеç хисепленсе тăраççĕ. Кăна хăшпĕр СВБ ячейкисем 1940 çулта член укçисене пĕр пус та пухманнинчен курма пулать.

Районри колхозсенче пĕр Шуркассинчи ячейка кăна ĕçлет. Ку ячейкăна кăçал март уйăхĕнче ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Белова юлташ тăрăшнипе организациленĕ. Ячейкăра 40 член. Тата Новински салинче ячейка пур. Анчах унăн ĕçĕ курăнмасть-ха.

Юлашки вăхăтра райсоветăн ĕçне лайăхлатас тесе унăн председательне çĕнĕрен М. Чернов юлташа суйласа лартнă. (Унччен Юдин юлташ председатель пулнă, вăл нимĕн те туман). Анчах унтанпа 2 уйăх ытла иртрĕ пулин те, вăл ĕçе тивĕçлипе йĕркелеме тытăнман-ха. Хулара типографи çумĕнчи СВБ ячейкине кăна организациленĕ. Ку ячейкăна типографинче ĕçлекенсем пурте кĕнĕ. Унсăр пуçне тата «Портной» артелĕнче тата Древтехникум çумĕнче пĕтсе ларнă ячейкăсене организаци тĕлĕшĕнчен чĕртнĕ. Анчах вĕсем те нимĕнех тумаççĕ-ха.

Тĕне хирĕçле пропагандăна çакăн пек хакламаннине, пирĕн шутпа, пысăк йăнăш вырăнне шутламалла. ВКП(б) райкомĕ тата пуçламĕш парторганизацисемпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем тĕне хирĕçле пропагандăна чĕртсе яни, СВБ ячейкисене ĕçлекен туни кирлĕ. Тĕне хирĕçле лекцисемпе докладсене тата каласусене тăтăшах туса пымалла.

ЯДРОВ.

Агитаци ĕçне вăйлатса пыратпăр

ЕЛЧĔК. Кивĕ Эйпеçри агитколлективра 12 агитатор. Политикăллă агитаци ĕçне йĕркеллĕ туса пыма яла ултă участока уйăрнă. Агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнче Маленков тата Вознесенский юлташсем туса панă докладсене, çавăн пекех партконференци йышăннă решенисене тĕплĕн ăнлантарса парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине ăнлантарса параççĕ. Колхозра, бригадăсенче пухусем пулса иртеççĕ.

Политикăллă агитаци ĕçĕпе Хардов, Павлов, Волкова юлташсем примерлă пулса тăраççĕ. Вĕсем агитаци ĕçне умра тăракан задачăсемпе çыхăнтарса пыраççĕ.

Н. ЕМЕЛЬЯНОВ.

Производство ĕçĕсене тĕплĕн пĕлес пулать

Макарон фабрикинчи пуçламĕш парторганизаци хăйĕн предприятин производствăллă ĕçĕсене сăнаса вĕренмест тесе калама çук. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн коммунистсем конференци кăтартса панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем чылай палăртнă.

Пуçламĕш парторганизаци хăйĕн пухăвĕнче фабрикăн уйрăм цехĕсенче ĕçсем мĕнле тăнине сӳтсе-явнă. Çак кунсенче парторганизаци пухăвĕнче цехсенчи тата фабрика килкартинчи тасалăх çинчен сӳтсе-явнă, пухува цех начальникĕсене, стахановецсене, инженерно-технически работниксене те чĕннĕ. Пуçламĕш парторганизаци производствăри ытти ыйтусемпе те интересленет.

Анчах та парторганизаци фабрикăн производствăллă ĕçĕсене тĕплĕн пĕлсе ертсе пымасть. Сăмахран, фабрикăра сушильнăй цех çителĕксĕр ĕçлет. Çак цехра час-часах ĕçре чăрмавсем пулаççĕ. Тарăсем тăвакан цех начар ĕçлени пĕтĕм фабрика ĕçне чăрмантарать. Анчах та парторганизаци çак цехсен ĕçĕсемпе тĕплĕн интересленмен, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсен сăлтавне тупса палăртман.

Парторганизаци хăй йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешменни те пысăк çитменлĕх пулса тăрать. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене сӳтсе-явнă чухне ĕçе график тăрăх туса пыма кирли çинчен нумай каланă, кун çинчен парторганизаци пухăвĕн постановленийĕнче те çырса хăварнă. Анчах та цехсем график тăрăх ĕçлесе кашни кунхи задание тултарса пыраймаççĕ. Упаковка тăвакан цех мартăн 13-мĕшне çитиччен висĕ кун хушши кăна графика тултарса ĕçленĕ, ытти кунсенче плана тултарман. Хăшпĕр кунсенче цех питĕ начар ĕçленĕ. Çапла, мартăн 3-мĕшĕнче плана 54 процент, 4-мĕшĕнче 62 процент, 14-мĕшĕнче 66 процент кăна тултарнă.

График тăрăх фабрикăн кашни кун 3,7 тонна продукци туса кăлармалла. Анчах фабрика плана кашни кун тултарса пыраймасть, ĕç пĕрпек пулса пымасть. Чылай кун плана тултармасăр ĕçленĕ хыççăн, хăшпĕр кунсенче ытлашшипех тултарать. Сăмахран, мартăн 6-мĕшĕнче 4,13 тонна, 8-мĕшĕнче 3,97 тонна, 13-мĕшĕнче 3,98 тонна продукци туса кăларнă. Ку вăл фабрикăн плана кашни кун тултарса пыма май пуррине кăтартса парать. Анчах та мартăн 20 кунхи планне фабрика 80 процент кăна тултарнă.

Плана ассортимент тăрăх тултарассипе ĕçсем пушшех те начар тăраççĕ. 1941 çулти пĕрремĕш кварталта фабрикăн 35 тонна макарон туса кăлармалла пулсан, халĕ темиçе çĕр килограмм кăна туса кăларнă. Ушки 12 тонна туса кăларас вырăнне 3,6 тонна кăна туса кăларнă-ха.

Кунта культурлăхпа йĕркелĕхшĕн куллен кĕрешес вырăнне ытларах каласса вăхăта ирттерме юратаççĕ. Фабрика килкартинче темĕн тĕрлĕ япаласем йăваланса выртаççĕ, хăшпĕр цехсем те таса мар. Коммунистсен уçă пухăвĕнче комсомолец Степанов юлташ çапла каланă: «Пирĕн механически цехра кирлĕ мар япаласем нумай йăваланса выртаççĕ, цеха таса тытассишĕн тăрăшни çук. Стенасем çинче эрешмен картисем. Кантăксем хуралса кайнă, хĕвел çути те аран-аран кĕрет».

Çак пухурах фабрикăн главнăй инженерĕ Круглый юлташ хăшпĕр рабочисем ĕç вырăнне таса тытассишĕн нимĕн те тăрăшманнине кăтартса панă. Мартăн 25-мĕшĕнче вальцовщик Иванов юлташ вальцовкăна тасатмасăр, 180 килограмм чуста хăварса ĕçрен тухса кайнă. Тасалăх çине çакăн пек пăхнă фактсем механически цехра та пур. Кунта хăшпĕр работниксем инструментсене пуçтарса, тасатса хумасăрах ĕçрен тухса кайнине час-часах курма пулать.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçласа пуçламĕш парторганизацин фабрика ĕçĕн пур участокĕсене те тĕплĕн пĕлмелле, çитменлĕхсене çийĕнчех тупса палăртса, вĕсене хăвăрт пĕтермелле.

В. КАРЗАНОВ.

Единоличниксем хушшинче ĕçлессине вăйлатар

1941 çулти январĕн пĕрремĕш тĕлне Вăрмар районĕнче пурĕ 9875 хуçалăх, вăл шутран единоличниксен хуçалăхĕсем 1918 хуçалăх шутланнă. Çапла вара районри мĕнпур хуçалăхсенчен 80,5 процентне колхозсем пĕрлештерсе тăраççĕ.

Атнаш, Кукас Мăнçырма, Çĕнĕ Шулхан, Патти, Пăртас ялĕсенче мĕнпур хуçалăхсем пурте колхозра. Вĕсенче единоличник хуçалăхĕсем çук. Çавăн пекех Арапуçĕнче, Чăршçырмара массăллă-ăнлантаруллă ĕçе ăнăçлăн туса пынине пула юлашки вăхăтра единоличниксем колхоза чылай пĕрлешнĕ. Чăршçырмара 33 единоличник хуçалăхĕ пулнă пулсан, 3 уйăх хушшинче 20 хуçалăх колхоза пĕрлешнĕ. Арапуçĕнче 13 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Çав вăхăтрах, ялти агитколлективсем çителĕксĕр ĕçленĕ, политикăллă-массăллă ĕçе практикăллă ĕçпе çыхăнтарман çĕрте коллективизаци ӳсĕмĕ ерипен пырать. Урнар ялĕнче 108 единоличник хуçалăхĕнчен 1941 çулти висĕ уйăх хушшинче мĕнпурĕ те 7 хуçалăх кăна колхоза кĕнĕ. Хоруйĕнче—72 хуçалăхран 3 хуçалăх, Чупайра—69 единоличник хуçалăхĕнчен 6 хуçалăх хутшăннă. Вăтакасра 23 единоличник хуçалăхĕ шутланать пулин те висĕ уйăх хушшинче пĕр хуçалăх та колхоза кĕмен. 1941 çулта 3 уйăх хушшинче районри колхозсене 264 хуçалăх çĕнĕрен хутшăннă.

Урнар ялсоветне Урнар тата Саруй ялĕсем кĕреççĕ. Урнар ялсоветĕнче пурĕ 6 коммунист. Çапла пулин те ялсовет коллективизаципе юлса пырать. Çакă мĕнпурĕ те коммунистсем, ялсоветпа колхоз руководителĕсем, агитаторсем çителĕксĕр ĕçленипе пулса пырать. Юлашки вăхăтра партипе правительство колхозсене тĕреклетес тĕлĕшпе сахал мар постановленисем йышăнчĕç. Агитаторсен тĕп задачи—çав постановленисене колхозниксемпе единоличниксем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса парасси пулса тăрать.

Колхозниксене тĕрлĕ пухусенче çĕнĕ законсемпе паллаштараççĕ пулсан та, единоличниксем хушшинче пачах ĕçлемеççĕ. Çавăнпа та единоличниксем партипе правительство кăларнă законсене пĕлмеççĕ, пĕлсен те хăйсене майлă, тĕрĕс мар ăнланаççĕ. Ахаль мар ĕнтĕ единоличниксем государство умĕнче пысăк парăмра тăраççĕ. Акă Урнарти И. Никифоров государствăна какай тăратассинчен пăрăнса пурăнать, вăрманта ĕçлемест. Укçа-тенкĕсене те кая юлса тӳлет. Çапла 1940 çулти тӳлевсене кăçал анчах тӳлесе татнă.

Саруйĕнчи И. Семенов паян кун та государствăна 364 тенкĕ тӳлесе татман, К. Матвеев—448 тенкĕ т. ыт. Çав вăхăтрах ялсоветĕ вĕсене хӳтлесе тăрать. Ялсоветне кĕрекен икĕ ялти единоличниксен государствăна 14 пин тенке яхăн укçа тӳлемелле.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) Вăрмар райкомĕ Урнарти парти кандидачĕсен группине организацилерĕ, группăна ертсе пыма парторга Прокопьев юлташа уйăрчĕ. Урнар ялсоветне кĕрекен коммунистсен мĕнпур вăя массăллă агитаци ĕçне вăйлатасси çине хурса, единоличниксене колхоза явăçтарма тăрăшмалла.

И. СТЕПАНОВ.

МОПР организацийĕсен лайăх ĕçлемелле

Малта пыракан МОПР райкомĕсем тата ячейкисем пирĕн республикăра сахал мар. Вĕсем ĕççыннисене интернационаллă воспитани парас, член укçи пухас тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Акă, МОПР Сĕнтĕрвăрри райкомĕ (председателĕ Муштаков юлташ) 1940 çулта член тата шеф укçи пухмалли плана 126 процент тултарнă пулсан, кăçалхи пĕрремĕш квартал планне икĕ уйăх хушшинче 287 процент ытларах тултарнă.

МОПР Чкаловски тата Кувакино райкомĕсем иртнĕ çулта юлса пынă. Вĕсен кăçалхи ĕçĕсем сисĕнмеллех лайăхланса пыраççĕ. Чкаловски райком кăçалхи пĕрремĕш кварталта член укçи пухмалли плана 215 процент ытларах, Кувакино районĕ — 110 процент тултарнă. Çак районсенче кăçал членсен хисепĕ те чылай ӳснĕ. Йĕпреç райкомĕ те начар мар ĕçлет.

Çав хушăрах начар ĕçлекен райкомсем те пур. Ишлей, Комсомольски, Шăмăршă, Куславкка тата Елчĕк районĕсенче МОПР организацийĕсен ĕçĕсем япăхса кайнă. Член укçи пухмалли плансене 1,7 процентран пуçласа 7,7 процента çити кăна тултарнă. МОПР Куславкка тата Елчĕк районĕсенчи организацийĕсенче кăçал член укçи пачах пухман.

Районсенчи МОПР организацийĕсен ĕçне вăйлатни кирлĕ. Ĕççыннисене интернационаллă воспитани панипе пĕрлех член укçине те вăхăтра пухмалла.

Ф. ТИМОФЕЕВ.

Агитколлектива кун пек „руководитель“ кирлĕ мар

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Кушар ялсоветĕнчи агитколлектива ертсе пыма ВКП(б) райкомĕ райсовет исполкомĕн секретарьне Егоров юлташа çирĕплетнĕ. Анчах Егоров юлташ ВКП(б) райкомĕ хушнă ĕçе пурнăçа кĕртмест. Вăл агитаторсемпе висĕ уйăхра та тĕрре кăна тĕл пулса калаçать. Агитаторсен семинарĕсем пулмаççĕ, ĕçлеме те вĕрентмеççĕ вĕсене. Çакна пула ялсоветне кĕрекен висĕ колхозран пĕринче те ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене, партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине ăнлантарса паман.

Колхозсем çуракине хатĕрленес, вăрман касса хатĕрлес плана тултарас тĕлĕшпе питĕ сӳрĕк ĕçлеççĕ. «Свобода» колхозăн 300 фестметр вăрман касса хатĕрлемелле пулнă, вăл мартăн 2-мĕш тĕлне пĕр фестметр та хатĕрлемен.

А. Киселев.

Стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен канашлăвĕ

СЕНТЕР. Çак кунсенче колхозсенчи стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Н. Петухов юлташ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференци итогĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Ун хыççăн канашлу районри колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленсе пынине тĕрĕслеме рейд туса ирттерме йышăнчĕ.

С. НАЛИМОВ.

Пионер работникĕсен курсĕ

Нумай пулмасть Шупашкарта республикăри пионер работникĕсен курсĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Унта пĕтĕмпе 26 çын вĕренет.

Çак курс республикăри вăтам шкулсенче ĕçлеме аслă вожатăйсем вĕрентсе кăларать. Халĕ пулас вожатăйсем ВКП(б) историне, педагогикăна, пионерсемпе ĕçлессине, ача-пăча литературине, физкультурăпа çар ĕçне тата ытти предметсемпе те тăрăшсах вĕренеççĕ.

Пиллĕк уйăх вĕренсен вожатăйсем вырăнсене саланаççĕ.

Квартал планне срокчен тултартăмăр

Капашри «Швейник» промартель, партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илес майпа, Шупашкарти «Вышивка» тата Канашри «Красный воин» артельсемпе ăмăртăва тухнăччĕ. Ун чухне пĕрремĕш квартал планне мартăн 15-мĕшне тултарма обязательство илнĕ пулнă. Ку план, укçа çине куçарсан, 193600 тенкĕпе танлашнă. Çак плана артель чыслăн пурнăçларĕ, ăна вăл мартăн 15-мĕшне 216414 тенкĕлĕх, е 111,7 процент тултарчĕ.

Трикотажнăй цех (заведующийĕ О. Цветкова) квартал планне 225,2 процент, тĕрĕ тĕрлекен цех (заведующийĕ М. Яковлева) 149,7 процент, белошвейнăй цех (заведующийĕ Е. Фетисова) 145 процент таран пурнăçларĕç.

Социализмлă ăмăрту сарăлнăçемĕн стахановецсемпе ударниксен хисепĕ те ӳссех пычĕ. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта стахановецсемпе ударниксен шучĕ, 1940 çулти 4-мĕш кварталпа танлаштарсан, икĕ хут нумайланчĕ, тепĕр майлă каласан, 33 çынран 65 çынна çитрĕ.

Белошвейнăй цехри А. Круглова, А. Лушина, А. Дмитриева юлташсем хăйсен ĕç нормисене 200—250 процента çити тултарса пычĕç.

Строчно-вышивальнăй цехра ĕçлекен А. Баданова, Куликова, Катькова тата Румянцева юлташсем пит пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартрĕç. Вĕсем хăйсен кварталти планне мартăн 15-мĕшне 400—500 процент таран тултарчĕç.

Çавăн пекех хамăр халăхăн тĕррисене тĕрлес енĕпе ĕçлекен тата трикотажнăй цехсенче те пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартакансем сахал мар.

Артель кăçал икĕ хутлă çурт туса пĕтерчĕ. Халĕ çĕвĕ çĕлекен, тĕрĕ тĕрлекен тата белошвейнăй цехсем çак çурта куçрĕç. Кунтах хĕрлĕ кĕтес тунă. Ĕç хыççăн хĕрлĕ кĕтесре рабочисем шашка-шахмăтла, доминолла, биллиардла, тĕрлĕрен музыка инструменчĕсем çинче выляççĕ. Хĕрлĕ кĕтесрех хор, драма, ПВХО, ГСО, ВС кружокĕсен занятийĕсем пулса иртеççĕ. Рабочисен культурăллă канăвне организацилеме пĕлни производствăра лайăх ĕçлесе пыма пулăшать. Эпир хĕрлĕ кĕтес ĕçне çак енĕпе туса пыма тăрăшатпăр.

Нумай пулмасть, артельре производствăллă канашлу пулса иртрĕ. Канашлура рабочисемпе служащисем Шупашкарти «Вышивка» тата Канашри «Красный воин» артельсемпе тунă социализмлă ăмăрту договорне 1941 çул вĕçленичченех тăсма йышăнчĕç, 1941 çулти производство планне ноябрĕн 7-мĕш тĕлне тултарма пулчĕç. Çакна «Швейник» артель ăнăçлăн пурнăçласса шансах тăмалла, вăл пĕрремĕш кварталти çитĕнӳсене шута илсе татах та лайăхрах ĕçлеме пултарать.

Н. ЕГОРОВ.

Мастерăн производствăра пысăк право пулмалла

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнче Маленков юлташ мастер çинчен çапла каларĕ: «пирĕн нумай предприятисенче йĕркелĕх туса хурас, ĕçе тĕрĕс организацилес тата технологи процесĕн çирĕп дисциплинине тăвас ĕçре мастерсем пысăк вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ», терĕ.

Производствăри çитменлĕхсене пĕтерес, рабочисен ĕç вырăнне лайăх организацилес, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе чăн малтанах мастер пысăк ĕçсем тума пултарать, унăн право кăна пултăр. Анчах пирĕн иртнĕ вăхăтсенче çапла та пулнă: рабочи мастера пăхăнмасăр тĕрлĕ ыйту тăрăх тӳрех цех начальникĕ патне кайнă, е мастер каланине итлемен.

Юлашки вăхăтра пирĕн ĕçре пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Халĕ эпир чылай ĕçсен енĕпе цехра пысăк правăпа усă куратпăр. Çакă вара производство процесне лайăхлатса пыма май парать. Сăмахран, манăн сменăра ĕçлекенсем ĕç вăхăтĕнче манран ыйтмасăр ниçта та кайма пултараймаççĕ. Ирхине ĕçе пырсан эпĕ вĕсене ĕç паратăп. Пĕлменнисем тупăнсан рабочисем ман пата ыйтупа пыраççĕ, эпĕ вĕсене кăтартусем паратăп, вĕрентетĕп.

Мастерăн пĕлĕвĕ пысăк пулмалла. Пĕлӳ пулмасан ĕç ăнасса ан та шан. Мĕншĕн тесен, кулленхи ĕçре тем те пулма пултарать, ăна санăн пĕтермелле. Ку кăна мар, мастерăн малта пыракансен опычĕпе ыттисене ĕçлеме вĕрентмелле. Халĕ манăн сменăра 36 çын ĕçлет. Ĕç нормисене вĕсем пурте тенĕ пекех тултарса пыраççĕ. Стахановецсем Веселкин, Ярзаев, Гришин, Попков, Вотяков юлташсем куллен икшер норма тăваççĕ. Çаксен опычĕсене сарса пырас тĕлĕшпе эпир тăтăшах производствăллă канашлусем ирттеретпĕр.

Партин XVIII конференцийĕ пирĕн умма пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çав задачăсене пурнăçлама рабочисене мобилизацилесси пирĕн кулленхи ĕç пулмалла. Ăна тивĕçлĕн пурнăçлас пулсан кашни мастерăн хăйне панă правăпа тивĕçлĕн усă курмалла.

А. МИЛОРАДОВСКИЙ.

Çĕмĕрлери древкомбинатри механически цехри мастер.

Малтисенчен пĕри

Ваçкасси ялсоветĕ (Советски р.) укçа-тенкĕ пухас плана срокчен тата ытлашшипех тултарчĕ. Ялсовет председателĕ Силивестров юлташ актива ĕçе анлăн хутшăнтарса пырать. Мартăн 5-мĕшне I-мĕш кварталти финанс планне 132 процент тултарнă.

«Ильич» колхоз членĕсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕр пус юлмиччен тӳлесе татнă. Колхоз председателĕ — ВКП(б) членĕ Гаврилова юлташ ялсоветне лайăх пулăшса пырать. Вăл ялсоветĕпе çыхăнса ĕçлет.

Ваçкасси ялсоветĕ кăçалхи самообложени укçине пĕтĕмпех пуçтарса пĕтернĕ. Самообложени укçине кирлĕ çĕре расходлаççĕ. Халĕ Юрмекейкин ялĕнче пĕрлешӳллĕ мунча туса пĕтерчĕç. Колхозниксем уншăн питĕ хавас.

Я. Кузьмин.

Делопроизводство ĕçне йĕркелемелле

Производствăллă плана тултарас çĕрте учет ĕçне йĕркеллĕ туса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Партин XVIII конференцийĕ Маленков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюцире çапла каланă: «...тĕрĕс учет пулмасан, предприятине тата чугунçула ертсе пыма çук. Мĕн чухлĕ те пулин йĕркеллĕ учет çук предприятисен ĕçĕнче кĕтмен япаласем тухса тăма пултараççĕ. Çавăн пек предприятисенче руководитель кĕтмен çĕртенех ку е урăх чĕртавар, материалсем, çурмафабрикатсем, инструментсем, оборудовани çителĕксĕр пулнипе, производствăра пурпĕрех чăрмавсем пулма пултараççĕ».

Пирĕн Чăваш республикинчи предприятисем партконференци решенийĕсене чыслăн пурнăçласа пыма тытăнчĕç. Çакна май предприятисенче учет ĕçĕ те чылай лайăхланчĕ. Учет ĕçне йĕркелесе производство планне кашни кун, çирĕп график тăрăх тултарса пыраççĕ.

Предприятисенче, организацисенче тата учрежденисенче пысăк çитĕнӳсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те сахал мар. Хăшпĕр организацисенче учет ĕçне лайăхлатма тытăнман-ха. Пурлăхсене, оборудованисене тĕрĕс учета илсе пымаççĕ. Çавăнпа усă курса предприятисемпе организацисен пурлăхĕсене çаратма пăхнисем те палăраççĕ. Çак енчен Шупашкарти «Заготзерно» пунктне илсе кăтартма юрать. Унта çирĕп учет çук, пурлăхсене çаратни те пулнă.

Оборудованине, пурлăха тата материалсене çирĕп учета илнипе пĕрлех, предприятисенче делопроизводство ĕçне тĕрĕс йĕркелени кирлĕ. Документсене тата архив материалĕсене лайăх пăхса усрас пулать. Предприятисемпе организацисен руководителĕсене делопроизводство ĕçне тĕрĕс туса пыни пысăк пулăшу парать.

Анчах предприятисемпе организацисем делопроизводствăна йĕркелес ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ. Хăшпĕр организацисенче кирлĕ ĕç хучĕсем сĕтел çинче сапаланса выртаççĕ. Хăшпĕр руководительсем делопроизводство ĕçне япăхтарса янипе, ĕççыннисен жалобисене вăхăтра пурнăçласа пымаççĕ тата çухатнисем те пулнă. Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн руководителĕсем уйрăмах делопроизводствăна тивĕçлĕ вырăна лартма тăрăшмаççĕ.

Руководительсем улшăннă чухне çĕнĕ руководитель мĕнпур йышши пурлăха тĕрĕслесе йышăнать. Çав вăхăтрах делопроизводство мĕнле вырăнта тăнине нихăçан та тĕрĕслемеççĕ. Кунсăр пуçне архиври документсене те тĕрĕслени çук.

Предприятисенче бухгалтери докуменчĕсене çеç хаклаççĕ. Делопроизводство йĕркеллĕ пулманни, ĕç хучĕсене сыхласа усраманни руководительсене пачах та пăшăрхантармасть.

Республикăри хăшпĕр организацисем хăйсене пăхăнса тăракан учрежденисен ĕçне çиелтен тĕрĕслеççĕ. Вĕсем делопроизводство, учет тата архив докуменчĕсем мĕнле вырăнта тăни çине çаврăнса та пăхмаççĕ. Чăваш АССР Çĕрĕç, Çутĕç тата Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕсем хăйсене пăхăнакан учрежденисенчи учет ĕçне уйрăмах тĕрĕслемеççĕ.

«Кожупряжь» артелĕн тата Шупашкарти мунча конторисенче те ĕç хучĕсене тата архиври документсене сыхласа усрамаççĕ. Чăвашсен Государство Академи театрĕнче мĕнпур документсенчен çуррине яхăн çухатса пĕтернĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ нумай çулсем хушши ĕнтĕ хăйĕн япăхса кайнă делопроизводство ĕçне йĕркелесе çитереймест. Çавăн пекех архиври документсене те тирпейлĕ пăхса усрама тытăнман. Документсене сыхлас ĕçе шанчăклă çынсем çине хуман. Çакăн пирки иртнĕ çулта кирлĕ документсенех утиль складне кайса панă.

Пирĕн республикăри хăшпĕр колхозсенче çирĕп учет çук. Вĕсем документсене, архива тирпейлĕ пăхса усрамаççĕ. Учет ĕçне япăхтарнă пирки колхоз пурлăхне çаратнисем те пулнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсене учет ĕçне йĕркелеме пулăшмасть.

Делопроизводство япăх вырăнта тăнă çĕрте хаклă, кирлĕ хутсем, бланкăсем т. ыт. çухалма пултараççĕ. Çавăн пек кирлĕ хутсене çухатни государствăна пысăк сиен кӳме пултарать. Пичетсемпе штемпельсене уйрăмах тĕплĕн пăхса усрамалла.

Ĕç хучĕсем тата архиври документсем государство пурлăхĕ пулса тăраççĕ. Документсене ытти пурлăха сыхланă пекех пăхса усрани кирлĕ. Учет ĕçĕсене туса пыракансен, ĕç хучĕсене тата архиври документсене пăхса усрас ĕçре ĕçлекен работниксен хăйсене шанса панă ĕçе чыслăн пурнăçламалла. Архивран пĕр документа та çухатмалла мар. Руководительсен делопроизводство ĕçне тĕрĕслесе тăмалла.

П. ЕРМОЛАЕВ.

Комсомолецсем колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕренеççĕ

Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз районра, çавăн пекех республикăра та, пур ĕçсемпе те малта пырать. Вăл 1939 тата 1940 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă, выставкăна хутшăнма ăна кăçал та кандидата тăратнă.

Колхозăн экономики çавтери хăвăрт ӳсет. Унăн хăйĕн электростанци, черепица производстви пур, пахча-çимĕçпе хăмла ĕçĕсем пысăк тупăш параççĕ. Кунта пурçăн хурчĕсем ĕрчетеççĕ.

Колхоз ялхуçалăхĕнче кирлĕ çĕнĕ машинăсем çулсеренех туянать. Вăл выльăх-чĕрлĕхрен пит пысăк тупăшсем илет: кунта выльăх-чĕрлĕх фермисем пиллĕк. Колхозра строительство ĕçĕ анлăн сарăлса кайнă: лаша витисем, выльăх-чĕрлĕхсене тытса усрамалли вырăнсем, мастерскойсем, культурăллă учрежденисем, колхозниксем валли пурăнмалли çуртсем тăваççĕ.

Вăйлăн ӳссе пыракан обществăллă хуçалăх умне квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес задача тухса тăчĕ, мĕншĕн тесен, колхозăн пур отраçлĕсенче те кирлĕ вĕсем. Колхоза электричество кĕртнĕ май, монтерсем те сахал мар кирлĕ пулаççĕ. Черепица ĕçĕ аталанса пырать, кунта та ăста мастерсем кирлĕ курăнсах тăрать.

Камăн тăрăшмалла-ха çак кадрсене хатĕрлессишĕн? Паллах, çакна комсомол организацийĕн пуçарса пымалла. «Динамо» колхозри организацинче пурĕ 23 комсомолец. Вĕсем колхоз производствинче активлăн ĕçлеççĕ. Çакна пула комсомолецсем колхозниксем умĕнче тивĕçлĕ авторитетпа усă кураççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ комсомолецсем колхоз валли специалистсем хатĕрлес ыйту тухса тăрсан, ăна чĕререн ырларĕç тата хĕрӳллĕн пурнăçа кĕртме тытăнчĕç.

Рыбаков тата Чернов комсомолецсем черепица ĕçне вĕренеççĕ. Комсомолец Чернов тата ыттисем те электричествăна вĕренеççĕ, вĕсем монтерсем пулма хатĕрленеççĕ. Солин тата Применкин комсомолецсем ялхуçалăх машинисене тĕплĕн вĕренеççĕ.

Арçын ачасенчен хĕрачасем те юлмаççĕ, вĕсем çĕвĕ кружокĕ организациленĕ.

Хăйсен пуçарăвĕпе опытне сарас тесе «Динамо» колхозри комсомолецсем республикăри колхоз çамрăкĕсене чĕнсе каларĕç, вĕсем хăйсем пекех колхозсене кирлĕ кадрсене хатĕрлеме чĕнчĕç.

ВЛКСМ Обкомĕ çак пуçарăва ырларĕ, ăна республикăри çамрăксем хушшинче сарса пырас тĕлĕшпе конкретлă мерăсем йышăнчĕ.

Партипе комсомолăн республикăри пичечĕ динамовец-комсомолецсен пуçарăвне анлăн çутатса пырать. Вĕсен примерĕ тăрăх колхозра кирлĕ специалистсене хатĕрлес ыйту çинчен районри хаçатсем те тăтăшах çырса тăраççĕ. Динамовецсен пуçарăвĕ колхозсен çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацисенче анлăн сарăлнă.

Республикăра колхоз çамрăкĕсем комсомол ретĕнче 13 пин шутланаççĕ, вĕсенчен 5656 комсомолец ытла колхозра кирлĕ тĕрлĕрен специальноçсене вĕренеççĕ.

Элĕк районĕнче (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Гаврилов юлташ) çакăн пек кружоксем ĕçлеççĕ: плотник ĕçне 6 колхозра, тимĕрç ĕçне 8 колхозра, ялхуçалăх машинисене 10 колхозра, хурт-хăмăр енĕпе 5 колхозра, çĕмелкапан тăвас ĕçе 5 колхозра, кирпĕч производствине 13 колхозра, çĕвĕ ĕçне 19 колхозра вĕренеççĕ. Кусемсĕр пуçне телефон ĕçне, лаша кӳлмелли хатĕрсем тума, столяр ĕçне вĕренмелли кружоксем организациленĕ. Районра комсомолецсем 300 çын ытла колхоза кирлĕ специальноçсене вĕренеççĕ.

Çак районри Мăн-Тукташ тата Тавăт колхозĕсенчи комсомолкăсем çĕвĕ ĕçне активлăн вĕренеççĕ, вĕсен кружокĕнче занятисем пĕр сиктермесĕр пулса пыраççĕ.

Элĕк районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем—Ивановпа Власов юлташсем тимĕрç ĕçне вĕренеççĕ, вĕсем ĕç хыççăн кашни кунах тимĕрç лаççинче пулаççĕ, колхоз тимĕрçипе пĕрле ĕçлеççĕ. Кузьмин тата Алексеев комсомолецсем столяр пулма хăнăхса пыраççĕ.

«Шуçăм» колхозри комсомолкăсем тĕрĕ тĕрлекенсен кружокне организациленĕ. Хĕрачасем çак кружока питĕ юратса çӳреççĕ.

Шăмăршă районĕнчи Карабай-Шăмăршă колхозĕнче 1940 çулта клуб тума 11 пин тенкĕ ытла тӳленĕ, çак колхозрах тата тара тытнă тимĕрç ĕçленĕ. Халĕ комсомол организацийĕ (секретарĕ Муштаков юлташ) колхозри тимĕрç, столяр тата плотник ĕçĕсене вĕренессине организациленĕ. Комсомолецсем хăйсем умне колхозра кирлĕ специалистсене 1941 çулта хатĕрлесе çитерме задача лартнă.

Первомайски районри «Октябрь» колхозра (комсомол организаци комитечĕн секретарĕ Алексеев юлташ) столярсен кружокне организациленĕ, халĕ çак кружок вăйĕпе столярнăй мастерской тăваççĕ.

Çакăн пек лайăх тĕслĕхсем республикăра сахал мар. Çамрăксем тĕрлĕрен специальноçсене вĕренме пĕтĕм кăмăлтан туртăнаççĕ. Вĕсен пуçарăвĕсене колхозниксем хапăл тусах ырлаççĕ, вĕсене ĕçре пулăшса пыраççĕ. Колхоза кулленех кирлĕ специалистсем хатĕрлесси комсомолецсен активлăхне ӳстерет. Вăл комсомол организацисен мĕнпур ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Анчах, çакна калас пулать: колхоз çамрăкĕсенчен специалистсем хатĕрлесси пур çĕрте те ăнăçлăн пулса пымасть-ха. Хăшпĕр çĕрте çак ыйту тăрăх шавлакаласа ирттерчĕç те, çакăнпа ĕç пĕтрĕ, тесе шутларĕç. Илĕпĕр Пăрачкав районнех. Ку ыйту пирки кунта сахал мар калаçрĕç, анчах паянхи куна çитсе те конкретлăн нимĕскер те туманпа пĕрех. Динамовецсен пархатарлă пуçарăвне комсомолецсем патне çитермен. Райком колхозсенчи пуçламĕш организацисене çак хаклă пуçарăва пурнăça кĕртсе пыма пулăшмасть. Ку тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем те сахал пулăшаççĕ-ха. Комсомол организацийĕсем çак ĕçе опытлă колхозниксене те çителĕксĕр явăçтараççĕ. Комсомолăн облаçри организацин задачи—комсомолецсен ырă пуçарăвне анлăн сарасси тата ăна вĕçне çитересси пулса тăрать. ВЛКСМ обкомĕ колхозсенче, районсенче комсомолецсем туса хатĕрленĕ изделисен выставкисене ирттерме палăртрĕ.

Хăватлăн ӳссе пыракан колхоз производстви валли эпир кирлĕ специалистсене хатĕрлесе çитерме тивĕçлĕ, ăна пурнăçлама пĕтĕм вăя хуни кирлĕ.

Д. ПАРОЯТНИКОВ.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ.

Лашасемпе тĕрĕс усă курар

Колхоз производствинче лаша пысăк вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Лашасăр колхозра нимĕнле кирлĕрех ĕç те тума çук. Çапах та, пур-ха пирĕн лашасене хакламан колхозсем. Ăна пĕтĕ кĕсресем чылай хăм пăрахнинчен курма пулать. Январьпе февраль уйăхĕнче Елчĕк районĕнче пурĕ 12 лаша вилнĕ, 18 кĕсре хăм пăрахнă, темиçе лаша сывмарланса юлнă. Лашасем сывмарланни пуринчен ытла вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курманнинчен тата кÿлмелли хатĕрсем япăххинчен килет. Сăмахран, «Ново-Чурино» колхозра колхозник А. Смолин вăрмантан хăйне валли икĕ лашапа турттармалли пĕренене пĕр лашапа сĕтĕрттерсе таврăннă, çавна пула лаша питĕ йывăр чирленĕ. «Ново-Чурино» колхозра лашасене йывăр ĕçпе чирлеттернисем татах та пур. Анчах колхоз председателĕ Павлов юлташ çавна пĕрре те шута илмест

«Коммунист», «Ново-Чурино», «Трактор», «Комбайн», Тимирязев ячĕпе тăракан колхозсенче кÿлмелли хатĕрсем япăх, вĕсене кашни лаша çумне çирĕплетсе хуман, çавна пула ку колхозсенче суранланнă лашасем те питĕ нумай. Колхозсенче лаша вăйне хакламан, лашана юратман çынсем чылай-ха. «Комбайн» колхозра бригадир Казаков вăрман турттарнă çĕртен пĕр лаша урине хуçтарса таврăннă. Колхозник К. Осипов («Трактор» колхоз) «Вихрь» ятлă лашана хĕнесе вĕлернĕ. Çавăн пекех «Автогигант», «Путь Ленина», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те лашасене çапса, шăммисене хуçса вĕлернисем пулнă.

Хăшпĕр колхозсенче лашасемпе ĕçлеме каякансем, фураж вăрласа, лашасене выçă ĕçлеттереççĕ, çапла вара лашасем ĕçрен сывмарланса таврăнаççĕ. Сăмахран, «Коммунист» колхозра колхозник В. Спиридонов вăрман турттарма кайсан лаша фуражне 17 килограмм вăрласа юлнă. М Титов, М. Власов, Сергеев — 12 килограмм, Зайцев 10 килограмм сĕлĕ вăрланă пулнă. Ун пек ирсĕр ĕçсене ытти колхозсенче те курма пулать. Çакă вăл колхоз пурлăхне çаратакансемпе çителĕклĕ таран кĕрешменнинчен, колхозра ĕç дисциплини начарринчен тата колхоз пурлăхне кирлĕ пек сыхламаннинчен килет. «Коммунист» колхозра фуража вăрлани çинчен нумай калаçаççĕ, çав вăхăтрах ферма заведующийĕ Артемьев юлташ фуража пĕр пытĕрмесĕр, сыснасен пÿлĕмне хурса усрать.

Лаша пире пысăк усă кÿрет, вăл колхоз производствинче çеç мар, промышленноçра та, тăван çĕршыв оборонинче те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та лашапа ĕçре тĕрĕс усă курмалла, ăна лайăх пăхса усрамалла.

А. УЛЕНДЕЕВ.
Елчĕк райçĕрĕç пайĕн старший ветврачĕ.

* * *

Подсобнăй хуçалăхра хĕрÿллĕ ĕç пырать

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** «Большевик» завод çумĕнче подсобнăй хуçалăх организациленĕ. Планра кăтартнă тăрăх кăçал ăна 15 гектар çĕр уйăрса панă. Унта пĕтĕмпе 8 тĕслĕ культурăсем акса, лартса тумалла. Вăл шутран çĕрулми 8 гектар çине, купăста 2 гектар çине, помидорпа кишĕр 1,5 гектар çине лартмалла. Малтанлăха шутланă тăрăх 1941 çулта çĕрулми 720 центнер, купăста 345 центнер, помидор 90 центнер, кишĕр 50 центнер тата ытти культурăсене пĕтĕмпе 1851,2 центнер туса илме палăртнă.

Çак çултах строительство енĕпе те чылай ĕçсем тумалла. Сăмахран, 50 ĕне валли коровник, контора тата общежитисемпе хваттерсем, овощехранилище туса лартмалла. Ялхуçалăх ĕçне ăнăçлăн туса пыма миçе çын, миçе лаша кирлине те шутланă. Хĕлĕн-çăвĕн кунта 14 çын ĕçлемелле тата сезон вăхăтĕнче 12 çын хутшăнмалла. Урăхла каласан, пĕтĕм ĕçе тума 13.820 кун каймалла.

Хальхи вăхăтра подсобнăй хуçалăхра хĕрÿллĕ ĕç пырать. Коллектив пĕтĕм хастарлăхпа çуракине хатĕрленет. Кашни рабочи ĕçе кÿлĕннĕ: тислĕк, минераллă удобренисем турттараççĕ, вăрлăхсем, ялхуçалăх машинисем хатĕрлеççĕ. Хуçалăхри рабочисем çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ, пăя хурса ĕçлеççĕ.

Паянхи куна ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитернĕ. Плугсемпе сÿресене тирпейлĕ вырăна вырнаçтарса лартнă. Купăста, кишĕр, помидор, хăяр, кăшман вăррисене те ытлашшипех хатĕрленĕ.

— Пурте çителĕклĕ. Çĕрулмипе сухан çеç çитмест. Вĕсене те эпир Чăвашторг отделенийĕ урлă илме шутлатпăр. Ку тĕлĕшпе райпланра ыйту лартнă, — терĕ подсобнăй хуçалăх заведующийĕ Н. Жуперин юлташ.

Туртăм вăйĕ те хатĕр. Хуçалăхăн хăйĕн 4 лаша пур. Вĕсем мăнтăр. Вĕсене валли фураж кирлĕ чухлех хатĕрленĕ.

Нумаях та пулмасть хуçалăхра 100 рама валли парник тунă. Халĕ унта ирхи купăста тата помидор акаççĕ.

Подсобнăй хуçалăх заводри рабочисене пахча-çимĕçсемпе кăна мар, тата ытти продуктсем тăратассипе те пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Кăçалхи çул кăна кунта сумалли ĕнесен хисепне 15 пуçа çитерме, 10 пăру пăхса ÿстерме палăртнă. Планпа пăхнă тăрăх çулталăк хушшинче кашни ĕнерен 2.100 литр сĕт суса илмелле.

— Ăна эпир вăтам шутпа çеç илнĕ, паллах, темле пулсан та ĕне пуçне 2.300 литр таран суса илме май пур,— теççĕ дояркăсем.

Завод дирекцийĕ пулăшнипе хуçалăх хăйĕн умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Вăл ĕнтĕ ĕнесен хисепне 7 пуçа çитернĕ те. Тăваттăшне сăваççĕ. Вăтамран вĕсем кашни кун 10 литр сĕт параççĕ.

Халĕ ĕнтĕ заводра ĕçлекенсем хăйсен подсобнăй хуçалăхĕ кĕске вăхăт хушшинче мĕнле пысăк пулăшу пама пултарнине лайăх туйса илчĕç. Кашни куллен вĕсем хăйсен буфетĕнче, столовăйĕнче йÿнĕ хакпа сĕт çиеççĕ. Заводри ачасен яслине те подсобнăй хуçалăх çителĕклĕ сĕт парать.

— Халĕ эпир анчах уйăрăлса тухнă çын пек кăна-ха. Пулĕ-ха, пурте çителĕклĕ пулĕ. Ун чухне заводри рабочисене хамăр тунă пахча-çимĕçпе, сĕт-çупа, аш-какайпа усрăпăр, — тет Жуперин юлташ.

Хар. ЛИСИН.

* * *

Тасалăхпа йĕркелĕх пулмалла

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ промышленноçпа транспорт умне тасалăхпа йĕркелĕх тăвас задачăна çирĕппĕн лартрĕ. Халĕ предприятисенче, цехсенче тасалăхпа йĕркелĕх тăвас ĕç сарăлса пырать. Нумай предприятисем цехсене тасатса йĕркене кĕртеççĕ.

Тасалăхпа йĕркелĕх колхозсенче те кирлĕ. Уйрăмăнах выльăх-чĕрлĕх фермисенче тасалăх пулмалла. Анчах, калас пулать, Красноармейски районри хăшпĕр колхозсенче, фермăсенче тасалăхпа йĕркелĕх çук. «Унгастрой» колхозăн сĕт-фермисенче таса мар, сĕт тыткалама савăт-сапасем çителĕксĕр. Пĕр витре çинех сĕт сăваççĕ, çавăнтанах ĕнесене шăвараççĕ.

«Искра» колхозри конюхсем пурăнакан пÿртре те таса мар, урайне çумаççĕ, пÿрт стенисемпе маччи хуралса ларнă. «Новая сила» колхозăн ферминче те, конюхсем пурăнакан çуртсенче те тасалăхшăн кĕрешмеççĕ.

А. ЛАНДЫШЕВСКИЙ.

Пахалăхлă вăрлăхшăн кĕрешмеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Хамăр корр.).** Иртнĕ çулта районри чылай колхозсен уйрăм культурăсем тăрăх илсен акмалли вăрлăх çителĕклĕ пулман. 22 колхозăн çеç пур тĕрлĕ культурăсем те хăйсеннех çитнĕ. Паллах ĕнтĕ, колхозсен уй-хирĕсене шуратса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлеме тивнĕ. Пĕр колхоз тепĕр колхоза вăрлăх парса пулăшнă. Пĕр тĕрлĕ вăрлăхпа тепĕр тĕрлĕ вăрлăх улăштара-улăштара илнĕ.

Иртнĕ çулхи опыт часах асран тухмалла мар. Районри парти, совет, çĕрĕç органĕсенчи работниксен тата колхоз руководителĕсен вăл опытран тивĕçлĕ вывод тумалла пулнă. Анчах та ăна курма çук-ха. Хăшпĕр колхозсенче паян куна çитсе те вăрлăхсене типтерлĕ пăхса усрама пĕлмеççĕ, кирлĕ пек пăхса усраманнине пула акма юрăхсăра кăлараççĕ. Райçĕрĕç пайĕн старший агрономĕ Алексеев юлташ каланă тăрăх, Карай ялсоветĕнчи «Красная звезда», Алманч ялсоветĕнчи «12 лет Октября» колхозсем иртнĕ кĕркунне тырпулсене нÿрĕ склада хывса хăварнă. Йĕркеллĕ пăхманнине пула вăрлăх пахалăхне чакарнине чылаях илсе кăтартма пулать кунта. Тĕплĕн сортламан тата нÿрĕ пирки вăрлăхсем кондицине лармаççĕ. Вара ку тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсен пулăшу ыйтма тивет. Çак сăлтавсене пулах-и тен çитес çуракинче акма 24 колхозăн 128 центнер пăрçа, 10 колхозăн 43 центнер ясмăк, 46 колхозăн 584 центнер вика çитмест.

Акма пахалăхлă вăрлăх хатĕрлессишĕн çителĕклĕ ĕçлеменнине çак факт та лайăх çирĕплетсе парать. Райçĕрĕç пайĕнчи сведенисем тăрăх, вăрлăхсене мартăн 20-мĕшĕнче кăна сортласа пĕтернĕ. Районри вăрлăх лабораторийĕнче вăрлăхсене анализ тăвасси те юлса пырать. Пĕрремĕш хут анализ тăвасçе январĕн 15-мĕшне вĕçлесе çитермелле пулнă. Мартăн 28-мĕшне илсен пурĕ те 88 процент ытларах çеç тĕрĕслесе тухнă. Иккĕмĕш хут анализ тума тытăнман та. Вăрлăх лабораторинчи работниксем питех те çавăрăнăçусăр ĕçлеççĕ тата колхозсем те вăрлăхсен шăтас пахалăхне хăвăртрах тĕрĕслеттерме тăрăшмаççĕ. Красноармейски ялсоветĕнчи «Победа», Еншик Чуллă ялсоветĕнчи «Новая сила» колхозсем тĕрĕслеме тулă, сĕлĕ, пăрçа вăрлăхĕсем кăна леçсе панă.

Уйрăм колхозсен вăрлăхĕсем нÿрĕ тата çумкурăк вăррисем нумаййине пула кондицине лармаççĕ. Пшонкă ялсоветĕнчи «Коммунар» колхозăн сĕлĕ, пăрçа, Мартынкасси ялсоветĕнчи «Красный Восток» колхозăн пур вăрлăхсем те кондициллĕ мар. Халиччен тĕрĕсленĕ 3.215 центнер тулă вăрлăхĕнчен 2.663 центнер, сĕлĕ 13.309 центнертан 6.299 центнер, пăрçа 1.409 центнертан 871 центнер кондицине лармаççĕ.

Çуракине тухасси инçех юлмарĕ. Кунта вăрлăхсене акма хатĕрлес тĕлĕшпе васкамаççĕ-ха.

Т. МАЙОРОВ.

* * *

Ĕçсем лайăхланаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Чугунçул станцин коллективĕ партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа пынă май хăйĕн ĕçĕнче хăшпĕр улшăнусем турĕ. Вокзал çуртне пĕтĕмпех шуратса тасатнă, урайне тăтăшах çуса тăраççĕ.

Рабочисем хушшинче — производствăллă çĕнĕ çĕкленÿ. Стрелочниксемпе лини хуçалăхĕнче ĕçлекенсем çулсене отлично тытса тăрассишĕн, поездсене пĕр аварисĕр, простойсăр çÿретессишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртупа стахановла движени сарăлсах пырать. Çак уйăхсенче уйрăмăнах машинист Воронцов юлташ йывăр составлă поездсене çÿретессипе калама çук паха çĕнтерÿ турĕ. Çитменнине тата вăл кашни перегонкăрах 3—4 минута малтан çитсе тухнă.

Ĕçшĕн хушса тÿлемелле туни—колхозниксен хастарлăхне çĕклет

Колхозсенчи производствăллă çĕкленÿ

Елчĕк районĕнчи чылай колхозсем 1941 çула паллă çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕç. 1939 çултипе танлаштарсан, 1940 çулта районĕпе тырă тухăçлăхĕ 30 процент хăпарнă. Иртнĕ çулта икĕ колхоз («Осоавиахим», «КИМ» колхозсем), 8 бригада, 13 звено кашни гектартан вăтам шутпа çĕр пăтран та ытларах тĕштырă туса илчĕç. «Осоавиахим» колхозри 2-мĕш бригадăри Г. Абрамов юлташ ертсе пыракан иккĕмĕш звено кашни гектартан вăтам шутпа 21,48 центнер тĕштырă туса илчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те ÿсĕмсем пур, 1938 çулта районĕпе пурĕ те 68 ферма, 4880 пуç выльăх пулнă пулсан, 1940 çулта 114 ферма, вĕсенче 5853 пуç выльăх-чĕрлĕх пулнă.

Колхозниксене ĕçшĕн тÿлес ĕçре уравниловка пулман пулсан, çитĕнÿсем, паллах, тата ытларах пулнă пулĕччĕç. Анчах пысăк тухăçлă тырпул туса илекен тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерекен, малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн тĕрĕс мар тÿлени ку ĕçре пысăк чăрмав кÿнĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл тепех пулмасть. Халĕ колхозниксен ĕçне ĕçкунĕ шучĕпе çеç мар, ĕçĕн пахалăхĕ, результачĕ тăрăх хаклаççĕ.

1940 çулта «Осоавиахим» колхозри пĕрремĕш бригадăри Н. Васильев юлташ ертсе пыракан 2-мĕш звено 43 гектар çĕр çинчен пурĕ 613 центнер (вăтам тухăç 14,07 центнер) тĕштырă пуçтарса илнĕ. Çав вăхăтрах Г. Абрамов юлташ ертсе пыракан 2-мĕш звено (3-мĕш бригада) 35 гектар çĕр çинчен 760 центнер (вăтам тухăç 21,48 центнер) тĕштырă пуçтарса илнĕ. Çĕр Абрамов юлташ звенин те Н. Васильев звенин çĕрĕ пекех, çыннисем те авсемех. Апла пулсан та Абрамов юлташ звенинче ĕçлекенсем, Васильев звенипе танлаштарсан, кашни гектартан 7,31 центнер тĕштырă ытлашши пуçтарса илнĕ. Ăçта секрет? Васильев юлташ звени çуракине вăраха тăснă, тырăсене лайăх çумламан, уборкăна йĕркеллĕ ирттермен. Çав вăхăтрах Абрамов юлташ звени агротехника ĕçĕсене яланах пурнăçласа пынă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ мартăн 13-мĕшĕнче колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановлени, сăмахран, иртнĕ çултах ĕçе кĕнĕ пулсан, Абрамов юлташ звенинче ĕçлекен 12 колхозник ĕçшĕн хушса акă мĕнчухлĕ тырă илнĕ пулĕччĕç: вĕсем планран ирттерсе 261,80 центнер (план 14 центнер пулнă) тĕштырă илнĕ, çавăншăн вĕсем 67,2 центнер тĕштырă илме пултарнă пулĕччĕç.

Хальхи вăхăтра районри мĕнпур колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем хушшинче çак постановленине ăнлантарса параççĕ, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Нумаях пулмасть районра малта пыракан колхозсенчен пĕринче—«Марс» колхозра колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртнĕ. Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановленин калама çук пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен ВКП(б) Чăваш обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ В. П. Чернов юлташ доклад туса панă. Постановленине ырласа 9 колхозник сăмах тухса каланă. Комсомолец Динмухаметов 1941 çулта колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 18 центнер тĕштырă туса илессишĕн «КИМ» колхозпа мĕнле ăмăртса ĕçлени çинчен каласа панă.

Партипе правительство ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксемпе колхозницăсене тухăçлă тырпулшăн татах та хастартарах кĕрешме хавхалантарать. «Марс» колхоз членĕсем гектартан 18 центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешсе уя тислĕк нумай кăларнă, 472 гектар çинче юр тытнă, 72 центнер ытла кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ.

— Пирĕн колхоз çуракине тухма паян тесен паян та хатĕр. 51 плуг, 11 сеялка, 26 культиватор, 76 сÿре юсанă. 90 урапа хатĕрленĕ. 250 михĕ пур. 42 çынна колхозра стахановла шкулта вĕрентсе кăларнă. Çуракинче ĕçлемешкĕн ĕç планĕ туса çирĕплетнĕ. Çуракине 7 кунта вĕçлеме шутлатпăр,—тет колхоз председателĕ Г. Гемалетдинов юлташ.

Колхозсем, бригадăсем, колхозниксем постановленине ĕçпе ответлеççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем гектартан 18 центнер тĕштырă илессишĕн кĕрешме уя 7315 лав тислĕк кăларнă, 4983 тонна торф, 350 центнер ытла кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ.

Колхозсенче производствăллă çĕкленÿ сарăлса пырать. Елчĕк районĕнчи колхозсем çуракине большевикла ирттерессишĕн, гектартан 100-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн, Комсомольски районпа пыракан ăмăртура малта тухассишĕн кĕрешеççĕ.

Ф. МАЙКОВ.

* * *

Ĕçе хаваслăн тытăнаççĕ

СЕНТЕР. «Çĕнĕ Юнга» колхоз иртнĕ çулта, агромероприятисене пурнăçласа пынипе, тухăçлă тырпул туса илнĕ. Колхоз Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулчĕ. Вазиков бригади хăйне çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕ çинче гектартан вăтам шутпа 117 пăт тырă туса илчĕ. Çав вăхăтрах 3-мĕш тата 4-мĕш бригадăсем гектартан 80 пăт ытларах кăна пухса кĕнĕ. Çакă вăл колхоза чылаях каялла туртрĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен йышăннă постановленине колхозниксем пысăк çĕкленÿпе хапăлларĕç.

Кăçал пур бригадăсем те гектартан 120 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешме пулчĕç. Колхоз çакна пурнăçа кĕртме пултарать. Халĕ вăрлăхсем хатĕр. Вĕсене лайăх сортланă, кондицине лартнă. 1500 тонна тислĕк кăларнă. Минераллă удобренисем 70 центнер кÿрсе килмелле пулнă, 135 центнер турттарса килнĕ. 1000 тонна вырăнне 3061 тонна торф кăларнă. Кунсăр пуçне 80 центнер кĕл, 41 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Агрокружокра 35 çын вĕренет. Программăна вĕренсе тухас пулсан тата 3 заняти ирттерес пулать. Кружока районри агроном Салдакеев юлташ ертсе пырать.

Бригадăсем социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Кашни бригадăра виçшер звено. Бригадăсен те, звеносен те ĕç планĕсем пур.

«Çĕнĕ Юнга» колхозри выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Сысна пăхакан Фекла Вазикова (ăна Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă) тата унпа пĕрле Марфа Салдакеева колхозницăсем кашни сысна аминчен 22 çăвăр илме пулчĕç. Вĕсен колхоз йышăннă план тăрăх кашни сысна аминчен 18-шар çăвăр илмелле.

Ĕне ферминче ĕçлекенсем Каптурина тата Маряшкина юлташсем кашни ĕнерен 1500 литр сĕт сума пулчĕç.

Н. ЯКОВЛЕВ.
«Çĕнĕ Юнга» колхоз правленийĕн членĕ.

„Валерий Чкалов“

(Ленинградри Ленин орденлĕ „Ленфильм“ киностудийĕн производстви)

Социализмлă çĕршыври халăхсем Совет Союзĕн Геройне Валерий Павлович Чкалова—пирĕн вăхăтри аслă летчике, хăйĕн ĕçне пит лайăх пĕлнĕ тата хăй шутланă ĕçшĕн вĕçне çитиччен çине тăнă паттăр, хăюллă, чăтăмлă летчике нихăçан та манас çук. Халăх массисем хушшинчен тухса ÿссе çитĕннĕ халăх юратакан летчик хăйĕн хĕрлĕ çунатлă кайăкĕпе вĕçсе тăван çĕршывăн темĕн чухлĕ чаплă ĕçсем турĕ. Унăн кашни вĕçевĕ авиацине пуян опыт панă. Хăйĕн юлташĕсемпе Совет Союзĕн Геройĕсемпе Г. Байдуковпа тата А. Беляковпа пĕрле Çурçĕр полюсĕ урлă вĕçсе вăл икĕ аслă материке—Çурçĕр Америкăпа Совет Союзне пĕр-пĕринпе çыхăнтарчĕ.

Чкалов авиаци валли çуралнă. Пурне те вĕренсе алла илме тăрăшакан Чкалов мĕн вĕренсе пĕлнипе чарăнса тăман, вăл çĕнĕрен те çĕнĕ экспериментсем тунă, татах та нумай пĕлесшĕн хыпса çуннă. Анчах вăл пуçарнă ĕçсем çине тĕрлĕ çынсем тĕрлĕрен пăхнă. Унăн хăюллă шухăшĕсемпе çĕнĕ ĕçĕсене час-часах халăх тăшманĕсем путлантарса лартнă, вĕсем унăн талантне сÿнтерме тăрăшнă. Вăл начальниксем хушман пек вĕçнинче те хăй тĕрĕс тунине курнă.

...Гауптвахт. Унăн стенисем тĕксĕм. Чкалова кунта вĕçев правилисене «пăснăшăн» хупнă пулмалла. Фильм Чкалов гауптвахтра ларнинчен пуçланать. Урамра—тĕтреллĕ çанталăк. Вĕçĕ хĕррисĕр çумăр пĕрĕхсе тăрать.

Алешин («батя») командир çиленнĕ. Халех «Марат» линкорпа çыхăнмалла. Анчах çакăн пек асар писер çанталăкра кам вĕçме пултарĕ-ха? Гауптвахтран Чкалова чĕнсе килеççĕ. Чкаловшăн нимĕн те хăрушă мар. Вăл задани илет тэ, ăна пит лайăх пурнăçлать.

Фильм авторĕсен умĕнче питех те йывăр творчествăллă задача тăнă. Пирĕн вăхăтри аслă летчикăн, тăван çĕршывăн мухтавлă, чаплă ĕçсем тăвасшăн хыпса çуннă çыннăн образне туллин, тĕрлĕ енлĕ уçса памалла, Чкалов характерне урăхлатса çĕнетес ĕçре коммунистла парти мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса памалла пулнă. Авторсем çак задачăна пит лайăх пурнăçа кĕртнĕ.

Чкаловăн пит паха енĕсемпе пĕрлех çитменлĕхсем те пулнă. Вĕçнĕ чухне вăл кирлĕ мар çĕртенех хăй пурнăçне шеллесе тăмасăр ашкăнни те пулнă. Вĕсем ĕнтĕ унăн вăй, туйăм ытлашшипех пулнинчен килнĕ. Вăл самолетпа йывăççем хушшинчен, кĕпер айĕнчен вĕçсе тухнă, правило тăрăх хушман çÿллĕшре тĕрлĕ фигурăсем тунă.

Фильм пуçламĕшĕнче пирĕн ума Валерий Чкалов шăпах дисциплинăна пăхăнман, хăйне-хăй мĕнле тыткаламаллине пĕлмен çын пек тухса тăрать. Хăйĕн вăйне мĕнле ĕçе ямаллине хăюллă летчике никам та кăтартса паман. Çав вăй нимĕн усăсăр, хăйне хăй шеллемесĕр ашкăнса вĕçнинче иксĕлсе пынă, унăн таланчĕ путланса ларма та пултарнă.

Анчах совет чăнлăхĕнче ун пек пулма пултарайман. Аслă летчике аслă Сталин тупнă. Большевикла парти Чкалов талантне ÿсме пулăшнă. унăн иксĕлми вăйне паллă тĕллев çулĕ йĕрĕпе янă. Вăл хăйĕн шухăш кăмăлне, туйăмне йăлтах урăхлатса çĕнетет. Çакна картинăра пит лайăх кăтартса панă.

Сывлăшра икĕ истребитель пĕр-пĕринпе хаяррăн «çапăçаççĕ». Чкалов Байдуковпа «çапăçать». Пиншер çын пĕлĕт çинелле тимлесе пăхать. Чкалов çĕнтерет.

Çĕнтерекене пĕтĕм халăхпа пĕрле Сталин юлташ та алă çупса саламлать.

Чкалов анса ларма шутласа аялалла анать. Анчах, сасартăк самолетăн пĕр урапи тухманнине курса, каллех çÿлелле вĕçсе улăхать. Шасси тухтăр тесе вăл самолетпа темĕн тĕрлĕ фигурăсем туса çавăрăнкалать.

Чкалов шассине кăларас ĕçе пĕтĕм вăйне хурать. Парашютпа сиксе самолета çĕмĕресшĕн мар вăл. Акă шасси тухрĕ, самолет чип-чиперех çĕр çине анса ларать.

Чкалов çĕр çинче. Ун патне Сталин тата Орджоникидзе юлташсем пырса тăраççĕ.

Сталин юлташ Чкаловпа калаçнине кăтартса панă вырăн фильмра чи лайăххи пулса тăрать.

— Мĕншĕн эсир ăна (машинăна) пăрахса парашютпа сикмерĕр? — тесе ыйтать Сталин юлташ Чкаловран.

— Çакăн пек машинăна пăрахма... Сталин юлташ, ку сăнавлă машина, вăл миллионшар тенкĕ тăрать...

— Сирĕн пурнăç, летчик пурнăçĕ пирĕншĕн кирек мĕнле чаплă машинăран та хаклăрах...—тет Сталин татăклăн.

Чкалов çухалса кайнă çын пек пăхать:

— Манăн пурнăç?..

...Чкалов чĕнмест... Вăл Сталина ответлеме сăмахсем те тупаймасть.

— Нумай вăхăт хушши вĕçме... Манăн алăсенче штурвала тытма пултаракан вăй пур чухне, куçсем çĕре курнă чухне пĕрмаях вĕçме сăмах паратăп, Сталин юлташ...—тет вăл юлашкинчен.

Сталин юлташпа курнăçса калаçнĕ хыççăн Валерий Чкалов пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Вăл дисциплинăна çÿлте тытакан большевик пулса тăрать.

Вăл Сталин юлташпа тĕл пулнă чухне Сталин юлташ каланă сăмахсене яланах асра тытать.

— Хăвăн умăнта пысăк, аслă тĕллев пуррине куратăн пулсан кăна харпăр хăйне шеллемесĕр тăма юрать! Тĕрĕс вĕт?

Чкалов хăйне тĕлли-паллисĕр тыткаланине майĕпенех большевикла тĕллев улăштарса пырать. Халичченхи Чкалов текех çук ĕнтĕ. Вăл хăйĕн пурнăçĕ çине йăлтах урăхла пăхать. Бортмеханик Пал Палыч ăна Кремль çийĕнче çурта пек ярăнса анса, иксĕр мертвăй петля тума, Сталин ĕçлесе таракан пÿлĕмĕн чÿречи патĕнчен вĕçсе иртсе ăна тав тума сĕнсен, Чкалов çапла ответлет:

— Пули-пулми лĕпĕртетсе çÿреме кама кирлĕ-ха? Çĕнĕлле пурăнас пулать!..

Чкаловăн иксĕлми хăюллăх пулнă. Хĕрлĕ Çартан таврăнсан вăл гражданла авиацине ĕçлеме кĕрет, анчах унта ĕçлени унăн кăмăлне тивĕçтерейместь. «Сывлăш автобусĕсем» çинче пассажирсем илсе çÿресси унăн ĕçĕ мар вăл. «Батя» летчик-испытатель пулма сĕнÿ парсан, вăл çав сĕнĕве савăнăçлăн йышăнать. Кунта вăл кирек мĕнле фигурăна та тума тата çĕнĕ машинăсем çинче чи малтан вĕçме пултарнă.

Сталинла маршрут тăрăх вĕçевсем ирттерме Чкаловпа унăн экипажĕ нумай вăй хунă. Çак вĕçевсенче пурнăçа шеллеменни тата хăюллăх кирлĕ пулнă, мĕншĕн тесен Чкалов умĕнче çавтери пысăк тĕллев—тăван çĕршывăн мухтавлă ĕçне пит вăйлă кайăкăн çунаттисем çинче Америкăна илсе çитерес тĕллев тăнă.

Çурçĕр Америкăна вĕçнине фильмра хумхантармалла кăтартса панă.

Экипаж валли кислород çитмест. Экипаж калама çук пысăк асап тÿсет анчах сталинла соколсем дисциплинăна çирĕп пăхăнаççĕ, вĕсем чăтăмлă, нимĕнрен те хăрамаççĕ.

Чкалов рольне республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ В. Белокуров пит лайăх вылять. Вăл аслă летчикăн образне ăшшăн, тĕрĕс кăтартса парать. Чкаловпа Белокуров тулаш енчен пăхсан пĕр сăнарлă пулманни нимĕнех те мар. Валерий Чкаловăн чун-чĕрине уçса панипе, вăл тăван çĕршыва юратнине тата чĕререн паранине, унăн тăшманĕсене пачах та хĕрхенменнине кăтартса панипе Белокуров картинăна куракансене питех те тĕлĕнтерет.

Сталин юлташ образне туса паракан М. Геловани тĕлĕнмелле лайăх вылять. Гелование кино куракансем нумай картинăсем тăрăх лайăх пĕлеççĕ. «Валерий Чкалов» фильмра Геловани актерăн пысăк мастерлăхне тепĕр хут кăтартса панă.

Ольга Эразмовна—летчикăн арăмĕн тата тусĕн ролĕнче К. Тарасова артистка питех те простă тата мăнаçа тухмалла мар выляса пачĕ. П. Березов (Байдуков), С. Яров (Беляков), Б. Жуковский (командир Алешин), С. Межинский (Орджоникидзе) артистсем те тивĕçлипех лайăх выляççĕ.

Г. Байдуков, Д. Тарасов, Б. Чирсков сценарийĕ тăрăх тунă «Валерий Чкалов» фильм—кинематографин çĕнĕ çĕнтерĕвĕ. Совет çынни çинчен, пирĕн вăхăтри аслă летчик çинчен унта пит тĕплĕн кăтартса панă.

Чăнах та, фильмра Валерий Чкаловăн пурнăçĕпе ĕçне питех те кĕскен кăтартса панă, анчах çапах та унăн образĕ пире хыттăн хумхантарать, Чкалов образĕ пирĕн пуçа нихăçан та асран тухмиех кĕрсе вырнаçать.

Н. БАЗАНОВ.

Куславкка райфинпайĕ мĕншĕн юлса пырать?

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ 1941 çулти I-мĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе финанс работникĕсем умне пысăк требованисем лартрĕç. Анчах Куславкка райфинпайĕ вăл требованисене пурнăçласа пымасть. 1941 çулти I-мĕш кварталти ĕçсене илес пулсан, вĕсем 1940 çулхи III-мĕшпе IV-мĕш кварталсенчен те начартарах. Мартăн 20-мĕшне республикипе финанс планне 85 процент тултарнă пулсан, Куславкка райфинпайĕ 66,9 процент кăна тултарнă, район республикăра укçа-тенкĕ пуçас тĕлĕшпе чи кайра тăрать.

Çакă вăл ĕççыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе начар туса пыманнинчен килет. Районра паянччен государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене юри парса татмасăр кутăнланса тăракан уйрăм хуçалăхсем çине çемçен пăхассине пĕтермен. Куславкка поселок советĕнче пĕр извозчиксенче кăна 20 пин тенкĕ парăм шутланать. Кашни кун мĕн чухлĕ укçа пухмаллине кăтартакан график тумаççĕ.

Хăшпĕр ялсоветсенче укçа-тенкĕ çавтери начар пуçтараççĕ. Март уйăхĕнче пĕр декада хушшинче Кармăш ялсоветĕнче 150 тенкĕ çеç пухнă. Ытти ялсоветсенче те ĕçсем кунтинчен лайăхах мар. Çакна I-мĕш кварталти плана пĕр ялсовет тăрăх тултарманни те лайăх çирĕплетсе парать.

Финанс ĕçĕнче актив ялта социализмлă ăмăртăва пуçарман. Чăваш АССР Финанс Наркомĕ патне янă çырура райфинпай заведующийĕ Липатов юлташ кун пирки çапла çырать: «1940 çулта Сĕнтĕрвăрри райфинпайĕпе тунă социализмлă ăмăртун договорне тĕрĕслемен, 1941 çулта ăмăрту договорне туман, ăна эпир I-мĕш квартал хыççăн, апрелĕн юлашки кунĕсенче, тăватпăр, мĕншĕн тесен, район халĕ чи юлашки вырăнта тăрать».

Çакăн пек ăнланать тата çакăн пек хаклать ĕнтĕ социализмлă ăмăртăва районри финанс пайĕн заведующийĕ. Ку енĕпе финанспа банк работникĕсен союзĕн районри местком председателĕ Лунин юлташ та Липатов юлташ пекех шутлать пулас, вăл социализмлă ăмăртăва организацилес шутпа нимĕн те тумасть. Вĕсем финанс планне тултарсан тин Сĕнтĕрвăрри районĕпе ăмăртса ĕçлеме хатĕрленеççĕ.

Районра финанс ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартакан ялсоветсене пама хĕрлĕ ялав тунă. 1940 çулта ăна никама та паман, кăçал та райфинпайĕнчех тăрать-ха вăл. Тен, 1940 çулта ялава илме пĕр ялсовечĕ те тивĕç пулман? Тĕрĕс мар. Кунерпе Аманик ялсовечĕсем финанс планне кварталтан квартала тултарса пынă, IV-мĕш квартал планне вара чылай ялсовечĕсем тăрăх тултарнă пулнă. Анчах райфинпайĕ ялсовечĕсене III-мĕшпе IV-мĕш кварталсенче тунă çитĕнÿсене çирĕплетес тĕлĕшпе çителĕксĕр пулăшса пынă.

Ĕçри тĕп никĕс—социализмлă ăмăрту пулмалла. Ăмăртăва райфинпайĕн кашни работникне, активистне, кашни ялсоветне хутшăнтарас пулать. Вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пыни кирлĕ. Куславкка райфинпайĕн çакна ăнланса илсе, финанс енĕпе кĕске вăхăтрах татăклă улшăну тумалла.

НОВИКОВА.

* * *

Куллен кирлĕ таварсене вырăнтах тума пулать

ИШЛЕЙ. Сюктерти промартель туса кăларнă япаласене районри тата Шупашкар хулинчи потребительсем хаваслансах илеççĕ. Хакĕ вĕсен пысăк мар, пахалăхĕ те чылаях лайăхланнă. Кăçал 171 пин тенкĕлĕх ытла сĕтел-пукан, шкафсем, катка-пичкесем тата ытти таварсене те туса кăлармалла.

Анчах та, промартель вырăнти чĕр-тавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет-ха. Артель тăвакан продукцин ассортиментне пысăклатас тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ сахал интересленет, вăл артелĕн экономикине вĕренмест. Районри колхозсем валли рыдвансем, урапасем кирлĕ, кунтах шашка тата домино туса кăларма пулать.

Артельсем продукци туса кăларма чĕртавар хатĕрлемеççĕ. Вăрман Сюктерти промартель валли вăрман хатĕрлеме çирĕплетнĕ «Красный пахарь», «Броневик», «Агроном», «1-ое Мая», Крупская ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем пĕрремĕш кварталти плана чиххăшĕ те 60 процентран ытла тултарайман.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларма чĕртавар хатĕрлес тĕлĕшпе Ермаковăри промартель те çавтери начар ĕçлерĕ. Кирпĕч çунтарма 450 кубометр вутă хатĕрлес вырăнне 50 кубометр çеç хатĕрленĕ. Районра кварталтан квартала хăйне панă плана тултармасăр ларакан райлесзаг пур. Вăл 1-мĕш квартал планне 60 процент çеç тултарчĕ. Графикпа куллен 100 çын çуран, 100 çын лашапа ĕçлемелле, халĕ пĕтĕмпе те 33 çын çеç лашапа ĕçлеççĕ.

Суту-илÿ организацисен ĕççыннисем мĕн ыйтнине шута илсе, мастерскойсене, артельсене заказсем памалла, артельсем туса кăларнă таварсене вырăнта ытларах сутмалла. Анчах райпотребсоюз çакна нихçан те ăнланса илеймест. Вăл вырăнта туса кăларнă таварсемпе суту-илÿ тăвасшăн мар. 1941 çулта районра туса кăларакан таварсенчен 6,5 процентне кăна йышăнма договор тунă. Çавăн пекех вырăнти чĕртаварсенчен продовольстви тăвас тĕлĕшпе те калама çук начар ĕçлеççĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Вӑтаҫӗр тинӗсӗнчи карапсен ҫапӑҫӑвӗ ҫинчен

ЛОНДОН, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Лондонра ҫӗнӗрен илнӗ сведенисем тӑрӑх, Вӑтаҫӗр тинӗсӗн хӗвелтухӑҫ пайӗнче пулса иртнӗ пысӑк ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче Италин 7 карап — 4 крейсер тата 3 эсминец пӗтнӗ. Кунсӑр пуҫне Англи тинӗс-ҫар авиацийӗн торпедоносец-самолечӗсем Италин «Литторио» йышши линкорне пысӑк сиен кўнӗ.

Пӗлтерўре кӑтартса панӑ тӑрӑх, Итали тинӗс-ҫар вӑйӗсене ҫапӑҫу районне Англин пӗр крейсерӗ илӗртсе пынӑ. Ҫапӑҫу районне Англин 31.100-шер тоннӑллӑ 3 линкорӗ пырса тухни Итали ҫар карапӗсемшӗн пачах кӗтмен япала пулнӑ. Англи линкорӗсем Итали крейсерӗсене 12 сехет хушши хӑваласа ҫўренӗ. Итали крейсерӗсем ҫине малтан Англин торпедоносец-самолечӗсем пырса тапӑннӑ пулнӑ.

Англин тинӗсри ҫапӑҫӑва хутшӑннӑ тинӗс-ҫар вӑйӗсем Александрине (Англи флочӗн Вӑтаҫӗр тинӗсӗн хӗвелтухӑҫ пайӗнчи базине) таврӑннӑ.

ЛОНДОН, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин Вӑтаҫӗр тинӗсӗнчи тинӗс-ҫар вӑйӗсен главнокомандующийӗ ҫапла каланӑ: вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа Итали линкорӗсен виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ, 8-шар дюймлӑ орудисемпе хӗҫпӑшалланнӑ крейсерсемпе эсминецсен ҫурри ытларах пайӗ, 6-шар дюймлӑ орудисемпе хӗҫпӑшалланнӑ крейсерсемпе эсминецсен 25 проценчӗ, пӗтӗм подводнӑй лодкӑсен 20—30 проценчӗ пӗтнӗ.

Югослави премьер-министрӗ кӑларнӑ распоряжени

БЕЛГРАД, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). Югославири телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Югославире ӗнер каҫхине Югослави премьер-министрӗн распоряженине пичетлесе кӑларнӑ. Распоряженире ҫапла каланӑ: халӑха нимӗнле хыпарсем те канӑҫсӑрлантармалла мар. «Правительство хӑйӗн мӗнпур кўршисем тӗлӗшпе туслӑ политика тытса пырать, — тенӗ распоряженире, — пуринпе те чи лайӑх отношенисем тытса пурӑнма тӑрӑшать. Вӑл малашне те ҫакнашкал политика тытса пырӗ, ку тӗлӗшпе хӑй мӗн тума пултарнине пӗтӗмӗшпех тӑвӗ. Пӗтӗм халӑх хӑйӗн яланхи ӗҫӗсене канӑҫлӑн туса пыма тивӗҫлӗ, ютҫӗршывсенче е Югославире сарӑлакан тӗрӗс мар хыпарсене пула канӑҫа ҫухатмалла мар Сӑлтав ҫук чухне харпӑрхӑй килӗсенчен пӑрахса кайма юрамасть, мӗншӗн тесен ҫапла туни сиен кўме пултарать. Государствӑпа халӑх интересӗсем харпӑрхӑйӗн ӑшӑ кӗтесне сыхлама тӑван ҫӗршыв, король тата халӑх ырлӑхӗшӗн кирлӗ пулсан, харпӑрхӑйӗн алӑкӗ умӗнче пурнӑҫа пама та хушаҫҫӗ. Ҫар, авиаци тата тинӗс флочӗ хӑйсем тума тивӗҫлӗ ӗҫе пурнӑҫа кӗртме хатӗр тӑраҫҫӗ. Мӗнпур влаҫсем, пуринчен малтан муниципальнӑй влаҫсемпе духовенство, кирек мӗнле обстоятельствӑсенче те хӑйсен вырӑнӗсенчех юлмалла. Тивӗҫлӗ министерствӑсем кӑна, палӑртса хунӑ план тӑрӑх, урӑх вырӑна куҫса каймашкӑн ирӗк пама пултараҫҫӗ, ҫакӑн пирки распоряженисем ҫырса панӑ. Шалти ӗҫсен министерствине кирлӗ мар чухне тӗрлӗ пухусем ирттерме чарас, ҫавӑн пекех тата тӗрлӗ пунктсенче ҫынсем пуханса тӑрассине чарас тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма приказ панӑ. Ҫак распоряжение ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пырас тӗлӗшпе министрсем ҫийӗнчех кирлӗ мерӑсем йышӑнма тивӗҫлӗ».

Мацуокӑна Итали королӗ йышӑннӑ

РИМ, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). Стефани агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Мацуокӑна Итали королӗ йышӑннӑ. Король ӑна ирхи апата чӗннӗ.

Мацуока Муссолинипе калаҫнӑ

РИМ, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). Стефани агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх паян каҫхине Мацуокӑпа Муссолини тӗл пулнӑ. Калаҫнӑ ҫӗрте Чиано тата Японин Римри посолӗ Хорикири пулнӑ. Калаҫу сехете яхӑн пынӑ.

КӖСКЕН

* Ыран мартӑн 24-мӗш тенӗ чух ҫӗрле вӗҫленнӗ эрне хушшинче Англин суту-илў тумалли 17 пароходне путарнӑ. Вӗсен пӗтӗм водоизмещенийӗ — 59.141 регистровӑй брутто-тонна.

*Марсель хулинчи (Франция) полици 13 коммуниста арестленӗ, вӗсем хушшинче темиҫе хӗрарӑм пур.

* Сан-Шаулу хулинчи (Бразилия) полици 30 коммуниста арестленӗ.

Шахматистсен матч-турнирӗ

ЛЕНИНГРАД, мартӑн 31-мӗш. (ТАСС) Паян пуҫланнӑ кругра Смыслов Лилиентальран выляса илнӗ. Болеславский — Ботвинник тата Бондаревский—Керес партийӗсем никам ҫӗнтерейменнипе вӗҫленнӗ — противниксем ничья тунӑ. 6 тур вылянӑ хыҫҫӑн Ботвинникӑн 3,5 очко тата выляса пӗтермен икӗ парти пур, Кересӑн — 3 очко, Лилиентальӑн — 2,5 очко (5 партирен).

Ыран Бондаревскипе Болеславский, Кереспа Смыслов, Лилиентальпа Ботвинник выляҫҫӗ.

ЛЕНИНГРАД, апрелӗн 1-мӗш. (ТАСС). Ҫиччӗмӗш турта Ботвинник Лилиенталя хирӗҫ хурисемпе вылянӑ. Вӑл маййӑпен хӑйӗн положенине вӑйлатса пынӑ, вара массӑллӑ атака тума пуҫланӑ. Анчах чи ответлӑ тапхӑрта Ботвинник Лилиенталя позицине виҫӗ хутчен пӗр пекех улӑштарма ирӗк панӑ. Турнир правилисем тӑрӑх парти никам ҫӗнтерейменнипе пӗтнӗ тесе йышӑннӑ.

Бондаревский — Болеславский тӗл пулӑвӗ ҫавтери ҫивӗччӗн иртнӗ. Дебют тӑрӑх, шуррисен позицийӗ активланса пынӑ, вара хурисен королевин флангне пешкӑсемпе штурмлама пуҫланӑ. Ростов гроссмейстерӗ тӗрӗсех мар тунӑ ходпа усӑ курса, Болеславский лашине панӑ, вара хӑй шуррисен королевин флангӗ ҫине хӑватлӑн атакӑлама пуҫланӑ. Ҫавна май хӑй панӑ фигурӑшӑн вӑл виҫӗ пешка илнӗ. Партине выляса пӗтермесӗр хӑварнӑ, Украина чемпионӗн вӑйсем ытларах.

Керес — Смыслов партийӗ лӑпкӑн иртнӗ. Эстони гроссмейстерне Мускаври ҫамрӑк мастертан лайӑхрах выляма тӗл килнӗ. Партине выляса пӗтермен, положени кӑткӑс, анчах Кересӑн вӑйсем нумайтарах.

Ҫичӗ тур иртнӗ хыҫҫӑн, малтанхи пекех Ботвинник малта пырать, унӑн 4 очко тата вылянса пӗтмен икӗ парти пур, вӗсенче Ботвинникӑн положенийӗ лайӑхрах.

Апрелӗн 2-мӗшӗнче Пионерсен двоецӗнче вылянса пӗтмен партисене выляҫҫӗ. Унсӑр пуҫне виҫҫӗмӗш турта вылянмасӑр юлнӑ Лилиенталь—Болеславский партине выляҫҫӗ.

Комсомолецсен гимнастикӑллӑ ӑмӑртӑвне ирттерес тӗлӗшпе ӗҫлекен оргкомитетра

Мартӑн 31-мӗшӗнче комсомолецсен массӑллӑ гимнастикӑллӑ ӑмӑртӑвне ирттерес тӗлӗшпе ВЛКСМ Обкомӗ ҫумӗнче ӗҫлекен оргкомитетӑн ларӑвӗ пулса иртнӗ.

Оргкомитет гимнастикӑллӑ ӑмӑртӑва хатӗрленесси комсомол хула организацинче мӗнле пыни ҫинчен ВЛКСМ Шупашкар хула комитет секретарӗн докладне итленӗ.

Оргкомитет гимнастикӑллӑ ӑмӑртӑва хатӗрленесси комсомолӑн Шупашкар организацинче ҫителӗксӗр пынине палӑртнӑ. ВЛКСМ хула комитечӗпе физкультура хула комитечӗ ӑмӑртӑва хатӗрленес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ пирки, хӑшпӗр пуҫламӗш организацисене халӗ те группӑсем туман тата тренировкӑсем ирттерме тытӑнман (сӑмахран, кирпӗч заводӗнче, Госбанкра, рех заводӗнче, «Труд» артельте т. ыт.). Хулари спорт залӗсемпе сахал усӑ кураҫҫӗ, занятисене расписанисӗр ирттереҫҫӗ, ӑмӑртусене ирттерме графиксем туман, судьясен коллегийӗсене йӗркелемен, группа командирӗсен пулӑшасси начар.

Оргкомитет ВЛКСМ хула комитетне тата физкультурӑпа спорт ӗҫӗсен хулари комитетне ӑмӑртӑва хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерме хушнӑ. Группӑсене халех туса ҫитерелле, медицина комиссийӗ ирӗк панӑ кашни комсомолеца ӑмӑртӑва явӑҫтармалла.

Оргкомитет ВЛКСМ райкомӗсене тата хула комитетне комсомолецсем сахал йышлӑ темиҫе организацине пӗр группӑна пӗрлештерсе ӑмӑртӑва хутшӑнтарма сӗннӗ. Оргкомитет ӑмӑртӑва апрелӗн 6-мӗшӗнче пуҫламалла тунӑ. Комсомол райкомӗсемпе пуҫламӗш организацисен ӑмӑртусем пуҫланнӑ ятпа вечерсем т. ыт. туса ирттермелле. Шкулсене, вулав ҫурчӗсемпе клубсене тата ӑмӑртусем пулса иртекен вырӑнсене лозунгсемпе, плакатсемпе илемлетмелле.

Чебоксарка шывӗ ҫырантан тухать-и?

Чебоксарка шывӗ пысӑк мар. «Унӑн хӑйӗн шывӗ те ҫук» тесе ҫырчӗҫ 1939 ҫулта Заводская тата Ворошилов урамӗсенчи чылай ҫуртсене шыв илнӗ хыҫҫӑн. «Хӑйӗн шывӗ ҫук пулсан та ҫав ҫул нумай ҫынсене нуша курма тиврӗ. Мӗншӗн тесен, Чебоксарка ҫинчи пӗвесене татса яман, кӗпер айӗсене пӑртан тасатман пирки шыв ҫапланнипе урамсене тухса карӗ, ҫуртсене илсе лартрӗ. Ҫакӑншӑн кам айӑплине тупаймарӗҫ.

Кӑҫал шыв илес хӑрушлӑх каллех куҫ умӗнче. Тир-сӑран завочӗ хӑйӗн отходне Чебоксарка ҫине кӑларса тӑкнипе шыва юхма чарса лартнӑ. Ҫурхи шывӑн ирӗксӗрех хӑйӗн ҫулне сулахай еннелле тытса Заводская урамне тухма тивет. Кунтан та ытларах, «Красный мебельщик» артель пӗвине халӗ те татман. Нимӗнле техникӑна пӑхӑнмасӑр, тӑпра купаласа тунӑ пӗве шыва кайма чарать. Шыв каллех урама тухса кайса Зеленӑй базар патне ҫул тытать. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара ҫак районра пурӑнакан ҫӗршер ҫынсен ҫурхи шыв илсе килекен асапа тўсмелле пулать.

Шыв тулнине хирӗҫ чӑнласах кӗрешес тесен, Чебоксарка шывӗ ҫинче тир-сӑран завочӗн отходне тасаттармалла, «Красный мебельщик» артелӗн пӗвине тӗппипех таттарас пулать. Кӗпер айӗсене пӑртан тасатассине те шыв кӗрлесе аниччен кӗтме юрамасть.

Шыв илнине хирӗҫ кӗрешме тунӑ хулари тройка валли халех ӗҫсем нумай.

Р. Ш.

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗн XI пленумӗ

Апрелӗн 1-мӗшӗнче ВЦСПС XI пленумӗнче Шверник юлташ доклачӗ тӑрӑх пренисем пынӑ. Союзсен центральный комитечӗсен руководителӗсем, фабрикӑсемпе заводсенчи комитечӗсен работникӗсем профсоюз организацийӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене уҫса параҫҫӗ, пӗр-пӗрин опычӗпе паллашаҫҫӗ. Пленумӑн ирхи ларӑвӗнче ӗҫе планласси ҫинчен, ӗҫ нормисем ҫинчен тата ыттисем ҫинчен те чылай ыйтусем кӑларса тӑратнӑ. Судостроительнӑй промышленноҫри рабочисен союзӗн центральный комитечӗн председателӗ **Гасенок** юлташ ҫапла калать: судостроени наркомачӗн предприятийӗсенче рабочисен 56—73 процентне ӗҫе кура тўлеҫҫӗ. Ӗҫ нормисем тӗлӗшпе те ҫитменлӗхсем пур. Хӑшпӗр заводсенче техника тӑрӑх палӑртса хатӗрленӗ нормӑсем мар, опытлӑ-расчетлӑ текен нормӑсем пысӑкрах вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл ӗҫукҫинчи уравниловка патне илсе пырать. Гасенок юлташ: профсоюзсем нормировани ӗҫне контроллесе тӑрассине вӑйлатма кирлӗ, тесе шутлать.

Азот промышленноҫӗпе спецхими ӗҫӗнчи рабочисен союзӗн центральный комитечӗн председателӗ **Качан** юлташ цехсемпе бригадӑсен заданийӗсене планлас ӗҫри ҫитменлӗхсемшӗн чылай предприятисене критикленӗ. Вӑл завод руководителӗсем аялти производствӑллӑ коллективсене плансене питех те кая юлса пани ҫинчен калакан чылай фактсене илсе кӑтартнӑ. Час-часах рабочи нарядра ӗҫе туса пӗтернӗ хыҫҫӑн тин илет. Ҫавӑн пек заводсенче программӑпа график тӑтӑшах пӑсӑлса пыраҫҫӗ.

Костромари Ленин ячӗпе тӑракан йӗтӗн комбинатӗнчи фабком председателӗ **Шахунов** юлташ профсоюзӑн тӗп звени — профгруппа ҫинчен каланӑ. Вӑл профгруппоргсем малти вырӑнта тӑни ҫинчен калакан чылай фактсене илсе кӑтартнӑ.

Комбинатри профгруппорг Щеголева юлташ пур работницӑсене те ӑмӑртӑва явӑҫтарма пултарнӑ. Хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене вӗсем кашниех пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Профгруппа членӗсем ӗҫ вырӑнӗнчи тасалӑхшӑн, ӗртаварпа материалсене перекетлессишӗн активлӑн кӗрешеҫҫӗ. Щеголева юлташ хӑй нормӑна 115—122 процент тултарса пырать.

Шверник юлташ хӑйӗн докладӗнче кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсем пирӗн ӗҫре те пур,—тет Центрти тата Кӑнтӑрти хӑма ҫуракан тата йывӑҫ каскалакан промышленноҫри рабочисен Союзӗн центральный комитечӗн председателӗ **Базаев** юлташ. — Пирӗн вырӑнти органсем, ҫавӑн пекех Союзӑн центральный комитечӗ те социализмлӑ ӑмӑртӑва бюрократла ертсе пынӑ. Костеревскри фабрикӑра, сӑмахран, договорсем тунӑ чухне профсоюз организацийӗсем малтанах хатӗрлесе хунӑ графаретсемпе усӑ курнӑ. Мускаври лесотара заводӗнче малта пыракан хӑшпӗр производственниксене стахановец званийӗсӗр тӑратса хӑварнӑ. Ҫак фактсене Союз центральный комитечӗ те асӑрхамасӑр иртсе кайнӑ.

Простойсене тата ытти тӗрлӗ йӗркесӗрлӗхсене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре производствӑллӑ канашлусем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫапла пулсан та, хӑма ҫуракан тата йывӑҫ каскалакан промышленноҫри рабочисен Союзӗн центральный комитечӗ, республикӑсемпе облаҫсенчи комитетсем вӗсем ҫине ҫаврӑнса пӑхманпа пӗрех пулнӑ. Пӗр ҫакна калани те ҫителӗклӗ: 1940 ҫулта производствӑллӑ канашлусен ӗҫӗ ҫинчен тӑракан ыйтусене пӗр хут та сўтсе-явман.

Юлашкинчен Базаев юлташ фабрикӑсемпе заводсене график тӑрӑх ӗҫлеттерме тытӑннӑ чухне хӑшпӗр предприятисен руководителӗсемпе профсоюз организацийӗсем тунӑ йӑнӑшсем ҫинчен каласа парать. Мускаври фанеропродуктсен заводӗнче актива явӑҫтармасӑрах ритмичнӑй ӗҫ ҫине куҫма хӑтланса пӑхнӑ. Палӑртса хуракан мероприятисем ҫинчен рабочисем кӑна мар, хӑшпӗр мастерсем те пӗлмен. Ҫакна пула график кашни кунах пурнӑҫа кӗрсе пыман.

Пленумӑн ирхи ларӑвӗнче тата ҫак юлташсем тухса каланӑ: **Аксенов** (станкоинструментальнӑй промышленноҫри рабочисен Союзӗн центральный комитечӗ), **Масленников** (полиметаллически промышленноҫри рабочисен Союзӗн центральный комитечӗ), **Джорджишвили** (парикмахерскисенче, мунчасенче тата прачечнӑйсенче ӗҫлекен работниксен Союзӗн центральный комитечӗ) **Скобелев** (Кӑнтӑрти автомобиль транспортӗнчи рабочисен Союзӗн центральный комитечӗ) т. ыт. те. (ТАСС).

Заем укҫине тўлесе татнӑ

ҪӖМӖРЛЕ. **(Хамӑр корр.).** Районри чылай колхозсем Виҫҫӗмӗш Пятилетка (виҫҫӗмӗш ҫулхи кӑларӑм) Заем укҫине срокчен парса татрӗҫ. Сӑмахран, Вӑрманти Колхозсен ялсоветӗнчи колхозсем ҫӗнӗ заема 4540 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ пулнӑ, ҫавна вӗсем пӗтӗмпех парса татнӑ. Кӑмаша ялсоветӗнчен «Волга» тата «Красный пахарь» колхозсем пӗтӗмпе 7965 тенкӗлӗх тўлесе хӑйсен обязательствине 100 проценчӗпех тултарнӑ.

Виҫҫӗмӗш Пятилеткӑн юлашки кӑларӑм заем укҫине Улхаш ялсоветӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан, «1-ое Мая», «Подборное» колхозсем, Мыслец, Тукас т. ыт. ялсоветсенче те пӗтӗмпех парса татнӑ.

Тир промыслинче

Омск облаҫӗнче хӗллехи ухута сезонӗ вӗҫленнӗ. Промыслара Ямало-Ненецк, Ханты-Мансийск национальнӑй округӗсенчи тата облаҫри ытти районсенчи колхозниксем 7 пин ҫын ытла пулнӑ.

Хальхи вӑхӑтра сунарҫӑсем килӗсене таврӑнаҫҫӗ. Хатӗрлев пункчӗсене кунсеренех горностай, пакша, тилӗ тирӗсем ҫӗршер тир илсе пыраҫҫӗ.

Осоавиахимовецсен ӑмӑртӑвне 19.000 ҫын ытла хутшӑннӑ

Осоавиахимӑн Чӑваш АССР Центральнӑй Совечӗ Осоавиахим членӗсен Хӗрлӗ Ҫар XXIII ҫул тултарнӑ ятпа пулса иртнӗ йӗлтӗрлӗ-командӑллӑ ӑмӑртӑвӗн малтанхи итогӗсене тунӑ. Пирӗн республикӑра вӑл ӑмӑртӑва 1-мӗш категорипе — 6, II-мӗш категорипе 46, III-мӗш категорипе 1.473 тата IV-мӗш категорипе 391 команда, пурӗ 19.000 ҫын ытла хутшӑннӑ.

Ӑмӑртӑва хутшӑннисенчен 9.997 ҫын ГТО комплексӗн II-мӗш сыпӑклӑ нормине панӑ.

Опытсемпе паллашаҫҫӗ

Харьковри техника ҫурчӗ заводсем хушшинче пӗр-пӗрин техникӑллӑ опычӗсемпе паллашас ӗҫе организациленӗ. Иртнӗ ҫулта инженерсемпе стахановецсен 60 бригади Мускаври, Ленинградри, Запорожьери, Уралти машинӑсем тӑвакан предприятисенче пулнӑ. 270 брошюра тата информациллӗ карточкӑсем кӑларнӑ, вӗсенче 10 заводӑн опычӗ ҫинчен каласа панӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Ҫак кунсенче Чӑваш АССР Совнаркомӗ Чӑвашсен Государство Академи театрӗнче лартса панӑ «Нарспи» тата «На берегу Невы» постановкӑсем ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Вӑл постановленире Государство Академи театрӗнчи чӑваш тата вырӑс коллективӗсем творчествӑллӑ ӗҫре тунӑ ҫитӗнўсене палӑртнӑ. Театрта «Нарспи» тата «На берегу Невы» постановкӑсене лайӑх пахалӑхпа лартса панине палӑртнӑ.

Ҫав постановкӑсене лартса парса чӑвашсен театр искусствинче паллӑ ҫитӗнўсем тунине палӑртса, Чӑваш АССР Совнаркомӗ академи театрӗн директорне Н. Элле, «Нарспи» пьеса авторӗсене А. Кӑлканпа В. Алагер, чӑваш труппин художествӑллӑ руководительне К. И. Иванов, «Нарспи» спектакле лартакан режиссера Л. Родионов, «На берегу Невы» спектакле лартакана, Чӑваш АССР искусствӑн тава тивӗҫлӗ деятельне Е. Токмаков, В. И. Ленин рольне вылякана, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артистне Б. Праудин юлташсене, ҫавӑн пекех чӑваш тата вырӑс трупписен пӗтӗм коллективне тав тунӑ.

Курсант-отличник

Михаил Макаров Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче иккӗмӗш ҫул пурӑнать. Ҫулталӑк хушшинче вӑл нумай ўсрӗ.

Халь комсомолец Макаров Н-ски авиачаҫре, командир Моторов ертсе пыракан подразделенинче чи примерлӑ курсант пулса тӑрать. Унӑн ятне социализмлӑ ӑмӑрту хӑми ҫинче яланах курма пулать, «отлично» паллӑсемпе вӗренет. Ҫавна кура Макарова подразделени командованийӗ вӗренме куҫарчӗ. Унта та вӑл яланах малти ретре. Нумаях пулмасть Макаров юлташа пӗр отделени пачӗҫ. Вӑл ертсе пыракан отделени подразделенинче малта пырать. Унӑн отделенинче красноармеецсене 60 процентне хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ.

Макаров юлташ хӑйӗн политикӑллӑ пӗлӗвне хӑпартас енӗпе те тӑрӑшса ӗҫлет. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренет. Пушӑ вӑхӑтсенче библиотекӑна кайса М. Горький, Л. Н. Толстой, А. С. Пушкин тата ытти писательсен произведенийӗсене вулать. Красноармеецсем хушшинче организациленӗ чӑваш хорӗнче тӑрать. Макаров тӑван ялӗнчи колхозниксемпе те ҫирӗп ҫыхӑну тытать.

М. В. О.

С. АРСЕНТЬЕВ.

Тўрлетни

ВКП(б) Шупашкар горкомӗн парткабинечӗ апрель уйӑхӗнче ирттерекен лекцисемпе консультацисен планӗнче («Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн ӗнерхи номерӗ) типографи айӑпӗпе числосем йӑнӑш пичетленнӗ. Апрелӗн 9-мӗш хыҫҫӑн лекцисем апрелӗн 11, 12, 15, 16, 17, 18, 19, 23, 24, 25 тата 26-мӗшсенче пулаҫҫӗ.

Лекци

Ыран, апрелӗн 4-мӗшӗнче, Пионерсен ҫуртӗнче хулари ҫамрӑксем валли **«Суворов—вырӑссен аслӑ полководецӗ»** темӑпа тўлевлӗ лекци пулать. Лектор—**Геркин** юлташ.

Лекци каҫхине 8 сехетре пуҫланать.

Итлеме билетсемпе кӗртеҫҫӗ, билетсене ВЛКСМ горкомӗнче илмелле.

ВЛКСМ горкомӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ХАЛӐХ ТЕН ҪИНЧЕН КАЛАНИ

Хытӑ поп

(Халлап)

Ӗлӗк пӗр поп тарҫӑ тытса пурӑннӑ, тет. Анчах, хытӑскер, тарҫине тӑрантма ҫӑкӑрне те пулин шелленӗ.

Пӗрре ҫак поп тарҫине ҫитерме ҫӑкӑр хурса парать те ҫапла калать:

— Ме, ҫи, тӑран, анчах ҫӑкӑрне пуҫланӑ ан пул! — тет.

Тарҫи шутласа ларать-ларать те, ҫапла тӑвать: ҫӑкӑрне кукӑль пек хӗрринчен касса ҫаврӑнать те, ҫӑкӑр ӑшне кӑларса ҫисе, ҫине каллех хупласа хурать.

— Ну, мӗн ӗҫлес, пачӑшкӑ? Ҫисе тӑрантӑм, — тет.

Поп пырса пӑхать те, савӑнса каять: ҫӑкӑр хурса панипех, пуҫламаннипех выртать.

— Эй, матӑшкӑ, тарҫӑ лайӑх пулчӗ пирӗн: ҫиме лартрӑм та, ҫӑкӑрне пуҫламасӑрах ҫисе тӑраннӑ, — тет поп хӑйӗн майрине.

— Апла пулсан, ӑна хамӑр виличченех тытса усрӑпӑр, — тет майри хӗпӗртесе.

Анчах тарҫи урӑхла шухӑшлать: «Капла, выҫӑлла, мӗнле ӗҫлесе пурӑнас ку поп патӗнче?» — тет.

Акӑ пӗрре пысӑк праҫник ҫитет. Чиркў хуралҫи, поп патне пырса, чиркў уҫма ҫӑраҫҫисем илсе каять. Тарҫӑ кӑна асӑрхаса юлать. Вара хуралҫӑ чиркӗве уҫса чан ҫапма хӑпарса кайсан, тарҫӑ чиркӗве попран малтан кӗрет те, престол айне пытанать ларать.

Акӑ поп та сӗтӗрӗнсе ҫитет те, кӗлтума тапратать.

Эй, турӑ, ҫырлах! — тет.

Тарҫӑ алтарта престол айӗнчен:

— Мӗн ҫырлахасси сана, тарҫуна выҫӑ усратӑн! — тет.

Поп хӑраса ўкет. Кӑшт тӑрсан тата:

— Пар турӑ! — тесе кӗлтӑва пуҫлать поп.

Тарҫи престол айӗнчен:

— Хӑлха чикки памалла сана тарҫуна тӑрантманшӑн! — тет.

Поп пӗрре кӑвакарса, тепре хӗрелсе каять.

Кӗлӗ пӗтнӗ-пӗтменех поп килне чупса ҫитет те, майрине калать:

— Ну, матӑшкӑ, эпир тарҫа выҫӑ усранине турӑ та пӗлнӗ иккен! Кӗлтума тытӑнсанах, турӑ мана: «Мӗн ҫырлахмалли сана! Тарҫуна тӑрантманшӑн хӑлха чикки памалла!» терӗ, — тет.

Майри калать:

— Апла тарҫа хамӑрпа пӗрлех ҫитерер преххут, — тет.

Вара тарҫӑ тин ӗҫе ҫын пек тутӑ хырӑмпа тухакан пулать. Хӑй ҫапах, тарӑхса ҫитнӗскер, попа тавӑрасси ҫинчен шухӑшлама пӑрахмасть-ха.

Часах попсен вутти пӗтсе ҫитет. Поп тарҫине калать:

— Ыран вӑрмана кайса вутӑ кўрсе кил-ха! — тет.

Ирхине ирех тарҫӑ поп лашине кўлет те, вӑрмана тухса каять. Лаши мӑнтӑр, тытса анчах пырать.

Акӑ хирӗҫ пӗр ҫын килет. Ырхан кӗсри унӑн чух кӑна сӗтӗрӗнсе пырать.

— Тавай лаша улӑштарар! — тет тарҫӑ ку ҫынна.

— Юрать. Мӗнчул сӗтев паран? — тет ҫын кулкаласа.

— Сӗтев санран тухать 100 тенкӗ, — тет тарҫӑ.

Ҫынни килӗшет. Тарҫӑ поп лашине тӑварса парать те, ырхан кӗсрепе вӑрмантан вут турттарса тухать. Ял ҫывӑхӗнчи ҫырма-ҫатрана ҫитет те, лавӗ путать ларать. Кӗсри туртать-туртать, хӑй те пута пуҫлать. Ҫилли килсе ҫитнӗ тарҫӑ кӗсрине пусать пӑрахать те, кӗлеткине аякка кайса пытарать, пуҫӗпе хўрине турттасем хушшине лапра ӑшне чиксе хӑварать. Хӑй попӗ патне хашка-хашка чупса ҫитет те:

— Лаша путса ларчӗ! Пуҫӗпе хўри анчах курӑнать! — тет.

Поп ҫўҫне-пуҫне вӗҫтерсе чупса тухать те, лаша патне ыткӑнать Чупса ҫитнӗ-ҫитмен лаша пуҫӗнчен карт — туртать, — пуҫӗ тухса килет: тарҫи ҫитет те, хўринчен туртать кӑна, хўри тухса килет.

Ак тамаша! Поп лашасӑрах таврӑнать киле.

Часах хӗлле пулать. Поппа тарҫӑ лаша илме Хусана тухса каяҫҫӗ. Ҫул ҫинче кусем шӑнса вилнӗ ҫынна тӗл пулаҫҫӗ.

— Аттине хывса илем-и? — тет тарҫӑ.

— Ил, ара, хывма пултарсан, — тет поп.

Тарҫӑ туртать-туртать вилӗ ҫын аттине, атти тухас вырӑнне ури татӑлать каять. Тарҫӑ икӗ аттине те, ури-мӗнӗпех, ҫуни ҫине илсе пӑрахать.

Кайсан-кайсан, кусем пӗр яла ҫитеҫҫӗ те, хваттере кӗрсе выртаҫҫӗ. Апатлансан, сивӗпе шӑннӑ поп кӑмака ҫине улӑхса выртать, тарҫи — урайне.

Ҫӗрле хваттер хуҫин ӗни пӑрулать. Пӑрӑва, ӑшӑтма тесе, пўрте йӑтса кӗреҫҫӗ те, кӑмака ҫине хӑпартса выртараҫҫӗ. Пурте ҫывӑрса кайсан, тарҫӑ тӑрать те, попа тӗксе вӑратать.

— Тӑр-ха, тӑр, пачӑшкӑ, пӑруланӑ ҫке эсӗ кунта! — тет. — Эрхерей пӗлсен, попран кӑларать вӗт сана — тет.

Попӑн сехри хӑпсах тухать. Аллине тӑсса, хыпашласа пӑхать те, йӗпе анчах ҫакланать: ҫумӗнче пӑру выртать.

— Ан шарлах, ачам! Ҫынсем ан сисчӗр! — тет поп.

Хӑй ҫавӑнтах хӑпӑл-хапӑл! — тӑрса тумланать те, хваттертен йӑшт! тухса, килне тара парать.

Тарҫӑ ҫавӑнтах лаши патне тухать те, ҫуни ҫинчен вилнӗ ҫын урисене илсе кӗртсе, кӑмака ҫине поп выртнӑ ҫӗре майлаштарса хурать.

Ирхине, тул ҫутӑлсан, тарҫӑ попа вӑратанҫи пулать.

— Тӑр, пачӑшкӑ, лаша кўлес пулӗ! — тет.

Кӑмака ҫинчен никам та чӗнмест.

Тарҫӑ кӑмака патне пырса, хыпашласа пӑхать те, аллине шарт! ҫапать.

— Мӗн пулчӗ тата? — теҫҫӗ хваттер хуҫисем.

— Ара, ман поп кӑмака ҫинче ҫывӑратчӗ-ҫке! Урисем кӑна тӑрса юлнӑ... Сирӗн пӑрӑвӑр ҫисе янӑ пулмалла! — тет.

Хваттер хуҫисем те пырса пӑхаҫҫӗ те, хӑраса ўкеҫҫӗ. Тарҫӑ кусене пушшех сехӗрлентерет:

— Ҫиччас эрхерее кайса калатӑп! — тет.

— Тархасшӑн ан кала! Ме, пӑрушне ху илсе кай. Ҫийӗнчен тата 100 тенкӗ укҫа паратпӑр, теҫҫӗ хваттер хуҫисем.

Тарҫӑ килӗшет. Пӑрӑва ҫуна ҫине тӑлӑппа чӗркесе пӑрахать те, укҫана кӗсйине чиксе, поп патне таврӑнать.

— Ну, пачӑшкӑ, эсӗ пӑру ҫуратни ҫинчен халӑхсене пӗлтерес пулӗ! — тет тарҫӑ попа.

— Тархасшӑн ан пӗлтер! Лаши те, пӑрӑвӗ те кирлӗ мар. Ме ҫийӗнчен 100 тенкӗ укҫа! — тет поп тарҫине.

Тарҫӑ укҫаланса каять те, килне таврӑнса, нумайччен пурӑнать.

Етӗрне районӗнчи **И. Иванов** колхозник каланӑ тӑрӑх **Е. И. Скориков-Маль** ҫырса илнӗ.

СООБЩАЕТСЯ ДЛЯ СВЕДЕНИЯ

УЧЕБНЫХ, СОВЕТСКИХ, ПАРТИЙНЫХ, ПРОФСОЮЗНЫХ, КООПЕРАТИВНЫХ ОРГАНИЗАЦИЙ И ВСЕХ ПРЕДПРИЯТИЙ ЧУВАШСКОЙ АССР, ЧТО

ЧУВАШСКАЯ ПРОМКАССА

РАСПОЛАГАЕТ ПУТЕВКАМИ

на сезон 1941 года в дом отдыха им. 12 лет ЧАССР.

В текущем сезоне намечены значительные улучшения культурного и здорового отдыха.

Спешите с подачей заявок и заключением договоров на приобретение путевок.

Дом отдыха начинает функционировать с 10 мая с 11-дневным пребыванием.

СТОИМОСТЬ ПУТЕВКИ 200 РУБЛЕЙ.

Справляться по адресу: Чебоксары, Калинина, 40, телефон 2-10.

3—3

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Шумерлинской артели им. Ширшова (в тыс. руб.) на 1-е января 1941 года.

АКТИВ	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.	ПАССИВ	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.
Основные средства	37,4	64,9	Фонды	21,6	38,1
Предметы, не относимые к основным средствам	4,4	7,3	Регулирующие статьи	0,3	0,3
Сырье, материалы и топл.	25,6	74,6	Долгосрочные кредиты	32,4	41,6
Производство	0,9	—	Кредиторы	27,6	43,2
Готовая продукция	7,3	28,9	Прибыль отчетного года	35,9	90,3
Денежные средства	7,1	1,7	Краткосрочные кредиты	—	38,7
Дебиторы	9,7	12,3			
Расходы за счет будущих периодов	0,5	1,6			
Отвлеченные средства	24,9	60,9			
БАЛАНС	117,8	252,2	БАЛАНС	117,8	252,2

Результаты хозяйственной деятельности

Убытки от списания без. долг.	—	1,1	От реализац. своего пр.	33,0	88,4
Чистая прибыль	35,9	90,3	От реализац. рознич. торг.	2,9	3,0
БАЛАНС	35,9	91,4	БАЛАНС	35,9	91,4

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашшвейпромсоюза 22 января 1941 года. Протокол № 1.

Предартели **Демидов.**
Ст. бухгалтер **Глухов.**
Пред. балансовой комиссии **Суетнов.**
Секретарь **Потянов.**

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0—67, редактор заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, экономика пайӗн — 0—88, ҫырусемпе рабсельқорсен пайӗн—2—30, «Ӗҫхӗрарӑмӗ» журналӑн—3—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2642. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.